Лидия ФИЛИППОВА

Пульсация

Чун таппи

Чебоксары
2015

УДК 821.512.111
ББК 84 (**2 Рос-Чув**) 6
53

Филиппова Л.И.

Ф53 ***Пульсация***

Чун таппи / ГУП «ИПК «Чувашия», 2015. - 280 с.: илл.

В книгу вошли избранные стихи автора, литературные произведения которой отличаются образностью, глубоким содержанием и проблемностью тематики. Отрадно, что лирика журналиста-публициста-поэта-писателя напрямую связана со знанием особенностей чувашского народа, его души, культуры. В сочетании с хорошим вкусом, трудолюбием, стремлением к поиску нового, стихотворения в завершение темы приобретают своеобразную изюминку.

Для широкого круга читателей.

ФИЛИППОВА Лидия Ивановна

Пульсация

Чун таппи

Редактор Н.Г. Смирнова
Фото Б.Филатова, С. Сташенко и др.
Верстка Н.Е. Александрова
Корректор В.Т. Иванова

Подписано в печать 20.04.2015. Формат 60 84/16. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Гарнитура Times New Roman. Усл. печ. л. 17,5
Уч.-изд. л. 8. Тираж 1000. Заказ № К-7933.

Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия»

Ăслă та вичкĕн куçлă, хăюллă та сатур Чăвашăмсене...

Моим чувашам, умным и дерзким...

Чун таппи

Хисеплĕ Вулаканăм! Пултарăн-ши
Туйма чĕрен каварлă таппине?
Йĕркесенче çителĕклех ултав та, -
Пытармĕ Автор чунĕн пăлхавне.

Кала, тĕнче, - чун е чĕре таппи-ши
Çывхартрĕ икĕ тăлăх этеме?
Кăтартрĕ çăтмаха та, тамăка та,
Çĕклерĕ шиксĕр вĕçсĕр тӳпене.

Сăввăмсенче - пин çын! Çавна туйса-ши
Чĕрем çунать. Анчах камах ăнланĕ
Енчен пĕри - мухтав юрри юрлать,
Тепри - хăйса çăвар уçма хăрать.

Чĕре таппи сӳнсен те - чун таппи юлать.
Улталама вăл памĕ никама та.
Ĕмĕр тусанĕ сийĕн-сийĕн хупланать...
Ман вулаканăм! Чăт, йывăр пулсан та...

* * *

Пульсация: души иль сердца?
Пульсация: сквозь времена и сны.
Пульсация: вопли и сила.
Пульсация: плач и песня души.

Ан ӳкĕнĕр!

Ан ӳкĕнĕр пĕччен юлсассăн,
Ан ӳкĕнĕр тăван нумай пулсан.
Ан ӳкĕнĕр туссем çумра тăрсассăн,
Ан ӳкĕнĕр пушшех те тусăр çук пулсан.

Ан ӳкĕнĕр сиртен кулсассăн,
Ан ӳкĕнĕр шеллев чуна çурсан.
Ан ӳкĕнĕр килпетсĕр ĕç тусассăн,
Ан ӳкĕнĕр чĕре тарăхупа тулсан.

Ан ӳкĕнĕр илем курсассăн,
Ан ӳкĕнĕр ăна сиртен тунсан.
Ан ӳкĕнĕр илемсĕр, тен, пулсассăн,
Ан ӳкĕнĕр ĕненнĕ юлташу сутсан.

Ан ӳкĕнĕр савни кайсассăн,
Ан ӳкĕнĕр вăл тепринпе юлсан.
Ан ӳкĕнĕр вăлах пуян пулсассăн,
Ан ӳкĕнĕр çӳлтен, тен, сĕмсĕррĕн сурсан.

Ан ӳкĕнĕр пит, çӳç шурсассăн,
Ан ӳкĕнĕр куçран куççуль юхсан.
Ан ӳкĕнĕр телей çукрах пулсассăн,
Ан ӳкĕнĕр теприн хавас сăнне курсан.

Ан ӳкĕнĕр! Кашнийĕн хăйĕн пурнăç.
Ан ӳкĕнĕр! Кашнийĕн пур илем.
Ан ӳкĕнĕр! Кашнийĕн хăйĕн тивĕç.
Ан ӳкĕнĕр! Кашнийĕн пур элем.

Не жалей!

Не жалей, если вдруг один на пути.
Не жалей, что родня большая.
Не жалей, что друзья будут рядом идти.
Не жалей, в одиночестве тая.

Не жалей, если слышишь ты смех за спиной.
Не жалей, если сердце на части.
Не жалей, что ошибки бывают порой.
Не жалей, что в душе злые страсти.

Не жалей, что в обычном найдешь красоту.
Не жалей, что ее не узнает другой.
Не жалей, что не можешь терпеть суету.
Не жалей, если друг был жестоким с тобой.

Не жалей, если бросит любимый тебя.
Не жалей, что с другой он остался.
Не жалей, если ему даст богатство судьба.
Не жалей, если он и зазнался.

Не жалей, что блестит в волосах седина.
Не жалей, если слезы от боли.
Не жалей, что нет счастья. Твоя ли вина?
Не жалей, что другим больше воли.

Не жалей! Каждый сам в жизни делает шаг.
Не жалей! Красота живет в каждом.
Не жалей! Если сделаешь что-то не так.
Не жалей! Помни в жизни о главном!

Айван тесе ан калăр...

Мана айван тесе ан калăр! –
Чунра хавас чухне кулатăп эп.
Тепĕр чухне хам пек пулма ан чарăр,
Кĕтмен çĕртен йĕме те пултаратăп эп.

Мана айван тесе ан калăр! –
Армутипе те киленетĕп эп.
Çӳл тӳпери кайăксемпе пуплетĕп,
Чĕркуçленсе хура çĕре пуç çапăп эп.

Мана айван тесе ан калăр! –
Хĕвел тухни пăлхантарать чуна.
Кăткă йăви... Тĕрĕс-тĕкел вăл пултăр.
Асамлăн чуптăватăп хĕрлĕ палана...

Мана айван тесе ан калăр! –
Анне пекех савап çĕршывăма.
Кашни самант кĕтмен асамлăх пултăр.
Çумăр тумламĕ те уçать кăмăлăма.

Мана айван тесе ан калăр! –
Ахăлтатса кулап аслатирен.
Сывлăм çинче ташлатăп йăлтăр-ялтăр.
Уй-хирпеле пăшăлтатăп темĕнччен.

Мана айван тесе ан калăр! –
Йĕретĕп, чунăма ыраттарсан.
Туссем чылай! Чăн-чăн туссем те пур ман.
Куççуль витĕр кулатăп тус тăшмана куçсан.

Пурнăçа юратса...

Пурнăçа юратса эп юрлап юррăма,
Парнелем-ши сире чунăма?
Çут кунпа савăнса шăратап юррăма,
Пĕлтерем-ши сире кăмăла?

Хушса юрламалли:
Парнеле эс мана тӳпери çăлтăра,
Юратса пĕрне çеç парнеле.
Эп ыйтмастăп нумай – пĕртен-пĕр çăлтăра,
Парнеле, пĕрне çеç парнеле.

Çут хĕвел ав тухать асамлăн кулса,
Анлă Атăл чуна тыткăнлать.
Шупашкарăм, тĕп хулам, сана савса,
Çĕнĕ кун çĕнĕлле пурăнать.

Уй-хир те вăрман... Туллин сывласа
Хăюллăн утар малалла.
Пуррине упраса, халăхпа савăнса
Çĕнĕ пурнăç туртать çуттална.

Çеçпĕл – Малтикас

Малтикас та, Çеçпĕл те тееттĕм
Эп ăçта çуралнине ыйтсан.
Ачаран чунпа темĕн кĕтеттĕм,
Килĕ, теттĕм, ĕмĕтĕм пулсан.
Кунсерен çунат пур пек вĕçеттĕм,
Юн чупмастчĕ тейĕн тăп! тăрсан.
Ĕç тесессĕн - чунăмпа вĕреттĕм,
Савăнаттăм - кăмăла кайсан.
Йăл-л-л! кулаттăм ирсерен тăрсассăн,
Пуçăмра çĕн шухăшсем пулсан.
Çĕнĕлĕх кĕтеттĕм куç уççассăн,
Лăпланман самант та куç хупсан.
Кунсерен шкул алăкне тытаттăм,
Темшĕн савăнаттăм мухтасан.
Хурласан та - пурĕпĕр кулаттăм,
Нихăçан та вĕчĕ эп тытман.
Аттепе анне пилне чуна хываттăм, -
Сăвап пулĕ халăха ырă сунсан...
Вĕсемпе пĕрле эп те вăйланаттăм,
Хурланаттăмччĕ пĕччен юлсан.
Ача чух малаш çинчен шутлаттăм, -
Лăпкă пулĕччĕ йĕрке тусан...
Усала курсан - чунăмпа эпĕ çунаттăм,
Çӳçенеттĕмччĕ çумра йăх-ях тăрсан.
Ытти чух та чĕремпе çунаттăм,
Сас-хура илтсессĕн такамран.
Пурпĕрех ахăлтатса кулаттăм,
Юхтарман куççуль эп куçăмран.
Çут пуласлăх ывăлра кураттăм,

Тилмĕреттĕм сывлăх Турăран.
Палăртни сан пурнăçлантăр, теттĕм,
Ман çинчен те манмăн, тен, кайран.
Пурнăçра шав тĕрĕслĕх шыраттăм,
Тĕслĕхне илеттĕм аттерен те аннерен.
Тĕрĕслĕхĕ çуккине пĕлеттĕм,
Пурпĕр пăрăнман шухăшăмран.
Ырăпа та, усалпа та тĕл пулаттăм,
Юлташсем сутатчĕç хушăран.
Пурпĕрех эп пуçăма усмастăм,
Иксĕлми вăя, тен, шаннăран?

Малтикас та, Çеçпĕл те тееттĕм
Эп ăçта çуралнине ыйтсан...

* * *

Эп – Канашсем! Эп – Çеçпĕл хĕрачи!
Çак пил сунать малтан-мала утма.
Эп – Канашсем! Эп – Çеçпĕл хĕрачи!
Юрамастех ентешĕмрен юлма!

Çеçпĕл çĕрĕ-шывне – тайма пуç!

Куç тулли эс, тăванăм, паян.
Туслăхра, ентешĕм, чунпа вăйланан.
Халăхпа пĕрле чух куну та пуян.
Çĕклен, Çеçпĕл ен, хăватлан!

Хушса юрламалли:
Малтикас та Матшӳ,
Анаткас та Уйпуç!
Тав тăвать сире ывăл-хĕрӳ:
«Çеçпĕл çĕрĕ-шывне – тайма пуç!»

Шĕкĕрсем ĕçчен те пуян.
Аслă ăрусен пехилне манманран.
Çеçпĕлĕмĕр ячĕ – пĕрле ачаран.
Çут сăнар çунса тăнăран.

Ватти те вĕтти! Тус та тăван!
Хăватлă та çирĕп пĕрле пулнăран.
Мехел пур - çĕнĕ кун килет катаран.
Çеçпĕл ен! Янра ян! та ян!

Юратăр!

Кунçулăм, сисĕнмесĕр эс иртетĕн.
Кун хыççăн кун вĕçет вĕççĕрлĕхе.
Кашни кунран çĕнĕлĕхсем кĕтетĕн,
Кулса кĕтсе илен кĕтменлĕхе.

Хушса юрламалли:
Юратăр 20-ре те, 30-та та,
Юратăр 50-ра та 60-та!
Кун-çул сакки кунран-кун анлăлантăр,
Телей çути çутаттăр чунăрта.

Кунçулăм, ан васка! Çумрах çӳретĕн –
Туятăп кунсерен сан хăватна.
Ырри, усалĕ – пурте пур, пĕлетĕн,
Кăштах чакарăн, тен, кăралăхна?

Кунçулăм, мĕншĕн-ши пĕччен çӳретĕн?
Парсам пире тĕнче ачашлăхне.
Пĕрле пулсан – вĕççĕрлĕхе вĕçетĕн
Чунпа туйса вĕçев асамлăхне.

Чăваш Енĕм

Чăваш Ен! Сан çинчен ман сăмахăм.
Ырату, куляну - сан пирки.
Хĕмленет чунăмри шĕл кăварăм,
Тĕнчене ăшăтать пайăрки.

Хушса юрламалли:
Чăваш Ен! Чăваш Енĕм!
Янăрать мăнаçлăн сан яту.
Чăваш Ен! Чăваш Енĕм!
Иксĕлми сан пултăр хăвату!

Чăваш Ен! Кулленхи ман çулташăм!
Шанчăкпа, ĕмĕтпе пурăнар.
Умăмра - ман Атăлçи Пăлхарăм,
Вăл çĕкленнĕ ирĕклĕхшĕн кар!

Чăваш Ен! Ман çунатлă юлташăм!
Çирĕпрех утар, хăватланар.
Чăваш Ен! Ман ĕмĕрхи хăлатăм,
Ваттисен пилне асрах тытар.

Чувашстан

Чувашстан! О тебе мое слово.
Боль и потеря – из-за тебя.
Горит огонь в душе моей снова,
Лучи весь мир согревают любя.

Припев:
Чувашстан! Край мой чувашский!
Пусть гордо звучит твое имя всегда.
Чувашстан! Край мой чувашский!
Пусть сила твоя не уйдет сквозь года.

Чувашстан! Попутчик мой вседневный.
Не испортить настроенья нам с тобой.
Предо мной Булгарии край древний.
Не хотела стать земля твоя рабой.

Чувашстан! Ты мой надежный друг.
Мы и впредь с тобой смелее будем.
Чувашстан! Надежды крепкий плуг,
Предков наставленья не забудем.

Тинĕс

Сан вăйна илсе каям, мăнаçлă тинĕсĕм.
Илемне пĕрле яланлăхах илем.
Хăватна парсамччĕ, вĕçсĕр тинĕсĕм, -
Эп ăна Чăваш Ене пиллем.

Пытăр унăн пурнăçĕ те тикĕссĕн.
Чăвашах пĕр чарăнми мухтам.
Манăн ĕмĕтĕм, ман çутă тивĕçĕм -
Халăхăм мăнаçлине курам.

Аякра та тунсăхлатăп тăван килшĕн.
Атăл тăрăхнех туртать чĕрем.
Эсĕ ан çиллен, мăнаçлă тинĕсĕм,
Куçăм умĕнче - ват йăмрасем.

Ан шелле, вăйна парсамччĕ, тинĕсĕм,
Çĕр-Аннемĕре, Чăвашăма тек ыр тăвам.
Ахаль мар эс йăлкăшан ахахăн-симĕсĕн,
Сăнарна халь шур хут çине çырам.

Море

Свою силу подари мне, море,
Красотой своею поделись.
Я возьму туда их, где на воле
Край чувашский тянет флаги в высь.

Пусть жизнь родного края процветает.
И вновь я восхваляю Чуваша.
Над Родиной моя мечта витает, -
Чтоб с морем Волги встретилась душа.

Вдали от дома мысли не спокойны,
И сердце тянется в родимые края.
Где у прудов плакучи ивы стройны,
Где белый пух нам дарят тополя.

Свою силу подари скорей мне, море,
Чтобы сделать смелым мой народ.
В твоем сине-бирюзовом взоре
Есть упорство, что зовет вперед.

Кĕсле сасси

Кĕсле сасси тухма пĕлмест чунран.
Асап та хурлăх илтĕнчĕ унта.
Пĕр çĕкленет те тӳпене, кайран
Йĕрсе анать-çке çылăхлă çурта.

Кĕсле сасси кайма пĕлмест пуçран.
Асапĕнче, тен, манăн айăп пур?
Таратăп пĕчченех çапла хамран,
Кĕсле сасси, чуна ан çур, ан çур.

Çук, пулăшмасть кĕсле те тунсăхран.
Çаплах ишетĕп тĕпсĕр авăрта.
Кĕслеçĕ! Хăтарсамччĕ асапран, -
Лăпланăпăр, тен, савăк юрăра?

Кĕсле сасси хурлантарать чуна...

Голос гуслей

Все голос гуслей говорит с душой.
Мне в струнах чудится какая-то печаль.
И отзвуки мелодии простой
Уходят в небо, в золотую даль.

А мысли не идут из головы,
Ведь в музыке моя печаль звучит.
Прошу, мне сердце не терзайте вы.
Оно сейчас как птица улетит.

Нет, не спасут и гусли от тоски.
Я задыхаюсь в омуте бездонном.
Скорее разомкни свои тиски.
Мне спой, гусляр, о чем-нибудь веселом.

А отзвук гуслей душу разрывает…

Хаш-ш! Хаш-ш-ш!

«Тинĕс, тинĕс, вăйлăрах
Хыççăн-хыççăн хум пăрах!..»
Çеçпĕл Мишши.

Хаш-ш! Хаш-ш-ш! Хашлатса сывлать мăнаçлă тинĕс.
Хаш-ш... Хаш-ш-ш... Илтĕнет çаплах пĕр тикĕс.
Сĕрме купăс, тунсăх юрă янрататăн,
Тинĕсĕм, мĕн-ма пĕр вĕçĕм хурланатăн?

Хаш-ш! Хаш-ш-ш! Хашлатса сывлать мăнаçлă тинĕс.
Вылянать хăй: халь - кăвак, часах ак - симĕс.
Ăнланатăп: санăн хăвăн уйрăм пурнăç, -
Ыттисем те тупĕç телейне, шанатăп.

Хаш! та хаш! сывлать мăнаçлă Хура тинĕс...
Çулĕсем, çапла, сисĕнмесĕр иртĕç.
Санăн ытамна туссем татах та килĕç.
Эп санпа пĕрре курсах туслашрăм, тинĕс!..

Хаш-ш! Хаш-ш-ш!

Хаш-ш! Хаш-ш-ш! Глубоко вздыхает море.
Хаш-ш! Хаш-ш-ш! Слышится все монотонно.
Это будто голос грустный на просторе,
Хоть и грозен ты, почему вздыхаешь томно?

Хаш-ш! Хаш-ш-ш! Глубоко вздыхает море.
Цветом синим и зеленым все играет.
Понимаю, жизнь кипит в бездонном взоре.
Говоришь, что каждый к счастью путь познает.

Хаш-ш! да хаш-ш-ш! вздыхает море…
Только мчатся незаметно годы.
Новые друзья прибудут к тебе вскоре.
Я в тебя влюбилась - дочь природы.

Çăлтăрăм

Камшăн-тăр усал-и, тен, ман кăмăлăм?
Чун ыйтать лăпкăлăх, пĕчченлĕх.
Хушăран çитмест, тен, çепĕçлĕх.
Мĕн тăвам, - çапларах çăлтăрăм.

Ăçтарах вырнаçнă-ши çав çăлтăрăм?
Чи çутти? Тен, çавă? Эх, пĕчченлĕх...
Тупаяс çук паян кун тĕрĕслĕх...
Çавăнпах пирчерĕ-тĕр кăмăлăм.

Ăнланайăн-ши мана эс, тинĕсĕм?
Шавăнта илтеп мăнаç пĕчченлĕх.
Сăнунта курап сӳнми илемлĕх.
Эсĕ те пĕччен-шим, кăйкăрăм?

Пĕчченре кăна хăватлă кăмăлăм.
Çук ултав. Унта - мăнаç тасалăх.
Эсĕ те пĕччен. Туслашар-и, тинĕсĕм?
Сан ытамунта курмас каварлăх...

Звездочка моя

Может, я кажусь кому-то злой,
Но живу об одиночестве мечтая.
Страх до сердца вдруг дотронется рукой.
Что ж поделаешь - звезда моя такая.

Где же ты, та звездочка моя,
Сотканная из лучей рассвета?
Одиночество, рабыня я твоя,
Сердце жаркое мое в броню одето.

Сможешь, море, ты меня понять
И увидеть, что в душе моей творится?
Красоты твоей всей не объять.
В шуме волн лишь одиночество таится.

И в одиночестве сильна душа моя.
Ничто покой и чистоту в ней не нарушит.
О, море! Покажи свои края.
Пусть одиночество меня с тобой подружит.

Ан хытар кăмăлна

Ан шелле чун-чĕре ăшшине,
Ан хытар кăмăлна.
Мĕнех тăвăн - тупма çук çуккине,
Пур пулсан - ан шелле тупруна.

Ан шелле чун-чĕре ăшшине,
Пайласам ăна тăванпа.
Çунтаран юрату хĕлхемне
Эс упра. Ан çыхлан усалпа.

Ан шелле чун-чĕре ăшшине,
Икар пек туртăнсам çуттална.
Хăш-пĕри хĕрхенет вăй-халне?
Пултăрах. Эс ĕçле кăйкăрла.

Ан шелле чун-чĕре ăшшине,
Пайăн-пайăн ăна тĕнчене сапала.
Тăрăшсам, çитерсем мехелне,
Чĕресем ялан юнашар ырăпа.

Ан шелле чун-чĕре ăшшине...

Не становитесь злыми

Теплоты душевной не жалей,
Подели ее между родными.
И горячий луч любви пролей,
Среди злых не становитесь злыми.

Не жалей душевной теплоты.
Как Икар, вегда стремись ты к свету.
Пусть не делятся другие, но не ты.
Сделай же прекраснее планету.

Теплоты душевной не жалей,
Пусть свободно льется, как водица.
Зло своей любовью одолей.
Сердце каждого добром должно забиться.

Теплоты душевной не жалей...

Эх-х-х, вăхăт!

Эх-х-х, вăхăт! Мĕн-ма чупан-ши хăвăрт?
Мĕн-ма çук сан шеллев тени?
Анчах, анчах иртместчĕ вăхăт,
Халь шуралать çӳç пайăрки.

Пĕрремĕш тĕлпулу, асамлă çĕмĕрт...
Мăшăрлану, хавас туй кĕреки...
Алра - пепке... Пин-пин çут ĕмĕт...
Ытла та тăкăс пулчĕ пурнăç мешехи.

Эх-х-х, вăхăт! Мĕн-ма чупан-ши хăвăрт?
Пулатпăр-шим мехел çитерейми?
Ăçта-ши эс, çарран çӳренĕ вăхăт?
Халех пулас килмест ура сĕтĕрейми.

Эй, вăхăт! Ан чуп-ха питĕ хăвăрт!..

О, время!

О, время! Почему летишь так быстро?
Не знаешь жалости ты к людям почему?
Ведь только юностью светились мы лучисто,
Сегодня же не скроем седину.

Первая встреча… Черемуха белая...
Свадьбы застолье родню собрало.
Малыш на руках… Шаги его первые…
Время, зачем ты добро продало?

И вот неожиданно грянут удары
От тех, кто и тени боится своей.
Таким долгой жизни желаю, не кары, -
В душе нет ведь Бога у этих людей.

О, время! Зачем ты бежишь без оглядки?
Неужели все силы уйдут как вода?
Помнят босых ребятишек полянки.
Не хочется стариться - душа молода.

О, время! Не стремись так быстро…

Ыйтмастăп нумай

Пуррипе çырлахса пурăнма тăрăшатăп, -
Эп ыйтмастăп нумай.
Çук пулсассăн паян, ыран пулĕ, туятăп, -
Кĕтме тивмĕ чылай.

Чунăмри усала ырăпа çеç ыйтатăп:
«Эс пулсамччĕ йăваш.
Вара эпĕ те, тен, майĕпен лăпланатăп,
Пур, тен, манăн малаш?».

Пуррипе çырлахма кирлĕ мар, ăнланатăп,
Чунра çунтăр кăвар!
Вăйсăрри те кирлех, йăваша йышăнатăп, -
Умра урăх сăнар.

Вăл та ку çитмест - чуна хытаратăп,
Ытти пулĕ кайран.
Пурнăç вĕçĕ те çитĕ, чухлатăп,
Иртейместĕп унран.

Не прошу многого

Я не тороплю событий бег
И во всем стараюсь видеть радость.
Если скажут мне сегодня «Нет!»,
Значит, ждать недолго уж осталось.

Зло молю, желая лишь добра:
«Погаси свое шальное пламя!
Может, успокоюсь я тогда,
И взметнется будущего знамя?».

До конца пройти нам нужно путь,
Загорись в душе, огонь, искрой.
Но совсем без слабости не будь,
Предо мною образ есть другой.

Если вдруг чего-то не хватает,
Я креплюсь: все будет, надо ждать.
На том свете бедных не бывает,
А с собой богатство не забрать.

Эп – çӳпĕ мар

Пулас килмест ман çĕрти çӳпĕ.
Усал тăвас теместĕп никама.
Шутлатăп та, ман чунăм - анлă кӳлĕ,
Вăй пур-и, çук-и, - пулăшатăп тăвана.

Пулас килмест ман çĕрти çӳпĕ.
Ура хурас килмест ман никама.
Пуянлăх, укçа-тенкĕ пур та - çĕрĕ,
Леш тĕнчере хака хумаççĕ тупрана.

Пулас килмест ман çĕрти çӳпĕ.
Ман ятăм пур. Пăхман куçран эп никама.
Ултав тĕнчи пĕтсен, çут кун, ак, килĕ,
Ун чух тĕрĕслĕхпе сиплетĕп сурана.

Пулас килмен ман нихăçан та çĕрти çӳпĕ.
Хаваслансa кĕтетĕп ырана.
Ултав-суя пĕтсен - ман кунăм çитĕ,
Тин лăпкăлăх вырнаçĕ чунăма.

.

Я – не пылинка

Не хочу я быть пылинкой земной,
Не хочу я делать зло и зла желать.
Стань, душа моя, широкою рекой,
Я всегда стараюсь близким помогать.

Не хочу я быть пылинкой земной,
Не хочу преграды людям воздвигать.
Деньги и богатство - не за мной,
На тот свет с собою не забрать.

Не хочу я быть пылинкой земной,
Чтоб заискивать и недостойных чтить.
Ложь исчезнет и настанет день святой,
Когда правдой буду рану я лечить.

Не хотела быть пылинкой никогда.
И с надеждой жду я новый день.
Успокоится тогда моя душа,
Когда ложь и зло исчезнут в тень.

Çĕр-Аннем

Çĕр-Анне куççульпе макăрать.
Халăха ăслăрах пулма тилмĕрет.
Çут çанталăк типет, кулянать,
Çĕр планета кун-çулĕ сӳнет.

Çĕр-Анне куççульпе тинкерет.
Халăха йăвашрах пулма тилмĕрет.
Таçта мар, юнашар вăрçă шавĕ кĕрлет,
Мирлĕ çын мĕншĕнне пĕлмесĕр вилет.

Каçар, Çĕр-Аннем! Сана пĕтерет
Хăвăн ывăл-хĕрӳ. Типĕтет
Çĕр çинчи пурнăçа. Мĕн кĕтет?
Çакна эпир мар, пĕр Турă пĕлет.

Çĕр-Анне куççульпе макăрать...

Земля-матушка

Земля-матушка горько рыдает,
Нас одуматься просит скорей:
Сохнет лес, и река засыхает, -
Тяжелей с каждым днем стало ей.

Смотрит на людей сквозь слезы, -
Ее жилки рвут изнутри.
И войны недалекие грозы:
Гибнут люди впустую, смотри!

Ты прости нас, Земля, за жестокость.
Здесь на жизнь упала цена,
И разверзлась огромная пропасть,
Знает Бог, чем грозит нам она.

Земля-матушка горько рыдает...

Ку – телей мар

Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ?
Мĕнле айванлăх - пĕртте тĕрĕс мар.
Хăшĕн пулать шăпи синкерлĕ,
Вăл килĕ-ха тесе кĕтмешкĕн кирлĕ мар.

Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ?
Теприншĕн, тен. Анчах та маншăн мар.
Темле çут кун та кĕç пулать тĕтреллĕ,
Айван сăмахсене шанмашкăн кирлĕ мар.

Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ?
Суя сăмах. Ку - паян куншăн мар.
Пуласлăхĕ курнать-ха та хĕвеллĕ,
Ыратăвĕ... Ăна та пытармашкăн кирлĕ мар.

Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ?
Мĕнле айванлăх! Пĕртте тĕрĕс мар.
Темле уяр çанталăк та кĕтретлĕ,
Кĕтме пĕлекенсем пурте телейлĕ мар!

Это - не счастье

Вы говорите, счастлив тот, кто ждать умеет?
Вы мне поверьте - это не всегда.
Погаснет жизнь, ясный взгляд тускнеет,
Ушедших не вернуть нам никогда.

Так что же, счастлив тот, кто ждать умеет?
Другие, может, но, увы, не я.
И светлый день туманом забелеет. -
Наивные слова принять нельзя.

Скажите, счастлив тот, кто ждать умеет?
Правдивыми попробуйте вы быть.
Хоть будущее радостью пригреет,
Но боль и память можно ли забыть?

Вы говорите, счастлив тот, кто ждать умеет?
Куда от этих глупых слов бежать?
От них, как холодом, насмешкою повеет.
Не каждый счастлив, кто умеет ждать!

Ку – эпĕ

Кулатăп та, йĕретĕп те пĕр харăс,
Чунри чула ирĕлтересчĕ ман.
Мĕн-ма-ши çук ман чунăн парăс?
Тарасчĕ аякка. Тен, таврăнăп кайран?

Кулатăп та, йĕретĕп те пĕр харăс,
Эй, çут тĕнче! Шеллев тени çук сан.
Хальччен ман пурнăçăм пыратчĕ тăнăç,
Пĕрех кулаттăмччĕ чунра асап пулсан.

Кулатăп та, йĕретĕп те пĕр харăс,
Çапса аркатăп, тен, вăй-хал çитсен.
Кирлех-тĕк, урапа, ак, тапăп тăрăс
Усал сунман чĕрем кӳтсе килсен.

Кулатăп та, йĕретăп те пĕр харăс,
Тен, пулĕ лайăхрах пĕччен юлсан?
Умра - çулсем. Пĕлместĕп, хăшĕ тĕрĕс,
Тен, пулĕ тĕрĕс тĕлсĕр ал сулсан?

Кулатăп та, йĕретĕп те пĕр харăс...

Это – я

И плачу, и смеюсь одновременно,
Мне б растопить холодный лед в груди.
Умчаться бы куда-то незабвенно,
А, может, я вернусь, ты подожди.

Одновременно я смеюсь и плачу.
На жалости ты скуп, о, белый свет!
Была я счастлива, ждала свою удачу,
Смеялась внешне, но душою - нет.

И плачу, и смеюсь одновременно.
Но хватит ли мне сил разрушить зло
Что хочет нами править и вседневно
Грозится свергнуть светлое добро?

Одновременно я смеюсь и плачу.
А, может, легче мне идти одной?
Но нужно выбрать путь, сомненья прячу.
А, может быть, махнуть на все рукой?

И плачу, и смеюсь одновременно...

Тĕттĕм...

Тĕттĕм.
Йĕри-тавра тĕттĕм.
Çутă кун пулсассăн та - тĕттĕм.
Ялтра хĕвел ялкăшсассăн та - тĕттĕм.
Чунсенче пирĕн тĕттĕм.
Пуçсенче те тĕттĕм.
Тĕттĕм...

Суккăр...
Ăслă çын та суккăр.
Витĕр пăхаканни те - суккăр.
Икĕ-виçĕ куçлăх тăхăнсан та - сĕм-суккăр.
Чунпа эпир суккăр.
Шухăшра пурте суккăр.
Суккăр...

Мĕскĕн...
Пĕтĕм тĕнче мĕскĕн.
Кăшкăраççĕ пулсан та – мĕскĕн.
Эх, чăвашăм! Мĕншĕн эсĕ пит мĕскĕн?
Чунпала эпир мĕскĕн.
Туслăхра та мĕскĕн.
Мĕскĕн...

Тĕттĕм. Суккăр. Мĕскĕн. Мĕншĕн?
Ăçта эс, вичкĕн куçлă хăюллă Чăвашăм?

Темнота

Темень…
Кругом темнота.
Здесь исчезает мечта.
В солнца лучах темнота.
В душах у нас пустота,
С сердца сошла чистота.
Темень…

Слепота…
И умный слепой
Шарит дорогу клюкой.
И зрячий сегодня слепой,
В пустоту он укажет рукой.
Все мы ослепли душой.
Слепота…

Нищета…
Мир наш погряз в нищете.
Потеряли себя в суете.
И в дружбе мы стали не те.
О, чуваш! Отзовись, ты где?
Почему мы живем в нищете?
Нищета…

Темнота. Слепота. Нищета настает.
Когда твое сердце, чуваш, запоет?

Самана

Ан çаптар саккăрла, самана!
Ан выля пурнăçпа!
Ан кăтарт усал хăватна!
Ан вăрçтар тăванна!

Шикленетпĕр кайма хăнана.
Савăнма халăхпа.
Пуç çапатăн çав укçана,
Ал тытан пуянпа.

Ан пăтрат, ан пĕтер ыр çынна!
Вăл пурнать хавалпа.
Сăпайли, сапăрри вырăнне
Кĕрешсем усалпа.

Вăрçă-харçă чĕртен тĕнчене
Йăвашлат ырăпа.
Тăлăх юлнă ачан куççульне
Типĕтсем ачашпа.

Нушапа пурăнан çук çынна
Тивĕçтер юр-варпа.
Хăйшĕн çеç çунан пуяна
Вĕрентсем пулăшма.

Ан çаптар саккăрла, самана!
Туслаш йăвашпа!
Çырлахтар усал кăмăлна!
Лăплансам сăваппа...

Судьба

Брось, судьба, смеяться над людьми!
С нашей жизнью не играй жестоко.
И не ссорь родителей с детьми.
Идеалы чести чти высоко.

Мы к друзьям идти боимся в гости,
И с народом радость разделить.
И от зависти подавимся со злости? -
Научились деньги лишь любить.

Ты не путай души у людей.
Все мечты, желанья их прекрасны.
Не вселяй в их разум злых идей,
Их сердца ко злому не пристрастны.

Только войны все гремят кругом,
И глаза сирот полны слезами.
Успокой же их своим добром.
Будущее светлое за ними.

Кто погряз в голодной нищете -
Хлеба дай тому и обогрей.
Научи богатых доброте,
Обездоленных душою пожалей.

Свой недобрый нрав скорей уйми,
Душу освяти скорей огнем.
Брось, судьба, смеяться над людьми!
Ночь кромешная сменится ясным днем.

Тăвансем

Аннесем çинчен нумай юрлатпăр,
Манăçмаççĕ пирĕн аттесем.
Пиччесем çинчен мĕн-ма манатпăр,
Хаклă мар-им аппасем, пиччесем?

Хушса юрламалли:
Пиччесем,аппасем,шăллăмсем!
Савăнатăп çĕр çинче эсир пурришĕн.
Пиччесем, аппасем, шăллăмсем,
Пулас марччĕ çич ют пĕр-пĕриншĕн.

Тăвансем, пĕрле сахал пулатпăр,
Ах, ытла та вăрăм çулĕсем.
Тĕл пулмашкăн пурпĕр ăнтăлатпăр,
Кăлтлатса тапаççĕ чĕресем.

Тăвана тăван пĕлми пулатпăр,
Ăмсанса калаçчăр ыттисем.
Пĕрле чух чунпа та вăйланатпăр,
Савăнса тăрайччăр аннесем.

Пĕр-пĕрне пăхса савса юрлатпăр,
Пĕр-пĕриншĕн - ырă сăмахсем.
Яланах çапла тату пурнатпăр,
Эпир пурте, пурте - тăвансем.

Родным

Братья и сестры мои дорогие!
Рада тому, что вы есть у меня.
Как лучики солнца, мои вы родные,
Мы справимся вместе со злобою дня.

Припев:
Если всегда друг за друга держаться,
Будет легко тогда жить на земле.
Трелями птицы начнут заливаться,
Месяц укажет всем дорогу во мгле.

Редко, родные, встречаемся с вами.
Жаль, что не сходятся чаще пути.
Мы насладимся встречи дарами,
Вместе сольются удары в груди.

Но и бывает, что мы разругались
Или друг друга понять не смогли.
Главное, чтобы обиды прощались,
Камнем тяжелым в душе не легли.

Салам сире!

Чăваш Ен! Пĕлет сана тĕнчемĕр.
Ывăлу сан вĕçнĕ уçлăха.
Чăваш çĕрĕ вĕççĕр вăл, туссемĕр,
Ак паян пуçтарчĕ халăха.

Хушса юрламалли:
Пурне те такăр çул сунатăп,
Хăюллăн утăр тăвалла!
Чун-чĕререн ырă сунатăп,
Мала пăхсамăр кăйкăрла!
Малаллах вĕçтер, Елена!
Олимпиада, малалла!
Ăнăçу сана, Валера!
Ан пăхсамăр каялла-а-а!
Хăюллăн утăр малалла-а-а!

Чи вăйлисем кунта, курсамăр,
Мĕнпур Европа саламлать пире.
Чăвашăмсем! Сапăр пулсамăр!
Ырă сунар савса пур хăнана.

Салам сире! Çивĕччĕн утсамăр!
Мăнаç тĕллев халь сирĕн умăрта.
Малта тепри? Пурĕпĕр кулсамăр,
Кăмăлтан саламлăр ыр сунса.

Тусăмсем! Эсир килсех тăрсамăр,
Чăваша чĕнсемĕр хăнана.
Çĕнтерӳ патне çеç ăнтăлсамăр,
Ĕмĕтсем ан юлччăр ырана.

Привет!

Земля чувашская известна всему миру.
Она соткана из леса и полей.
Космос кланялся ее родному сыну,
Нынче сколько собралось гостей!

Припев:
Желаем всем прямой дороги,
Идите смело вы вперед!
И пусть оставят вас тревоги,
Отправимся, орлы, в полет!

Здесь сегодня лучшие, смотрите,
Чувашам Европа шлет привет.
Чуваши мои, с улыбкой всех примите,
Добра и счастья пожелай в ответ!

Привет вам! Уверенней шагайте.
Задача не из легких предстоит.
Есть впереди другой? Не унывайте,
И пусть никто сегодня не грустит.

Друзья! Чувашия для вас всегда открыта.
Пусть сбудутся все светлые мечты,
Пусть будет ваша жизнь росой омыта.
Победы вам, любви и доброты!

Çĕр пус е çĕр тус?

Çĕр пус пуличчен çĕр тус пултăр, -
Çапла ахальтен каламан ватăсем.
Паян урăхла: «Кĕсье тулли пултăр,
Укçа çук пулсан, çук санăн туссем!»

Хăшне те пĕрне укçах кирлĕ пултăр,
Турттарччăр килне телевидеосем.
Сан нишлĕхне кура сĕмсĕррĕн кулччăр,
Туянччăр пин евро тăран кавирсем.

Анчах чунăмран капла мĕнех юлтăр? -
Укçа тĕксенех сутăнаççĕ туссем.
Маншăн вара чунах таса пултăр,
Ыттине пурпĕрех тупатăп, туссем...

Сто рублей или сто друзей?

«Не имей сто рублей, а имей сто друзей», -
Не зря говорили все предки.
Но ныне балом правит богатства злодей,
И случаи добра бывают редки.

Что ж, пусть кое-кому снится денег звон.
Пусть над твоею нищетой они смеются.
И тащат, словно крысы, все в свой дом,
Но истины лучи к ним не пробьются.

Куда же катится людской усталый мир?
За деньги предаем родного брата.
И стал нам золотой телец – кумир,
Ну а душа - бесценная утрата.

Ӑраскалӑм

Тӳперен татасшӑн мар çӑлтӑр эп,
Турӑ пилӗпех çырлахса пурӑнам.
Çук, кӗтместӗп ыррине текех,
Анчах халь тинех мӗн тӑвам?

Хушса юрламалли:
Ӑраскалӑм эсӗ ман, тунсӑх ӑраскал.
Манӑн тӑлӑх чунӑма амантайрӑн.
Ӑраскалӑм, каласамччӗ халь,
Мӗн кӗтет мана?

Çук, туман усал хальччен никама.
Мӗншӗн-ши хӑпмасть асап та терт?
Халь ӑçта чикем айван пуçӑма?
Телейӗм мӗн-ма-ши, мӗн-ма-ши килмест?

Çук, сунмастӑп хурлӑ пурнӑç никама.
Чӗрере çунать çурта - чун шырать чуна.
Телейпе эп çыхасшӑнччӗ пурнӑçӑма,
Çут хӗвел çул кӑтартать - хӗрхенет мана.

Судьбинушка

Нет мыслей у меня сорвать с неба звезду.
И буду жить путем, что выбрал Бог.
Нет, счастья более от жизни я не жду,
Но ведь душа застигнута врасплох.

Припев:
Горькая судьба моя, судьбинушка.
Поранила ты душу сиротинушку.
Судьбинушка, скажи,
Что же ждет меня?

Нет, в мире никогда не замышляла зла,
Но почему же горести со мной?
И только лишь в мечтах я счастлива была,
Что делать мне со своей головой?

Быть не желаю никому обиженным судьбой.
В душе горит звезда, и сердце ищет друга.
А я хотела быть счастливой лишь с тобой.
Ты покажи мне путь - диск солнечного круга.

Ан пăрахăр ачăрсене

Çĕр çине килет çĕнĕ чун,
Кулса тинкерет ашшĕ-амăш çине.
Ан ӳркен, эс ăна ырă сун,
Алла ил те, юрат пепкӳне.

Хушса юрламалли:
Ашшĕсем, ан пăрахăр ачăрсене!
Ан хăварăр тăлăха мĕскĕнсене.
Ашшĕсем, ан пăрахăр пепкĕрсене!
Кам хĕрхенĕ вĕсене, тăлăхсене?

Ак каллех килет çĕнĕ кун,
Туясшăн ача çывăх çын ачашне.
Ăнлансам. Йышăнсам. Эс ан сун
Пĕчĕк чуна тăлăхсен кунçулне.

Эс, атте, мĕн тăван? Ан тун!
Ма пăхмастăн текех кил енне?
Кирлĕ мар-им, атте, хăвăн юн?
Ма çуратрăр мана, мĕскĕне?

Пĕрле чух хĕпĕртетчĕ чун
Пăхнăçем ашшĕ-амăш çине.
Аманать çамрăк чун - ашшĕ çук,
Кам ирттерĕ, сиплĕ суранне?

Не бросайте детей

Родился новый человечек на свет.
На родителей своих с улыбкой глядит.
Пожелай ему добра на много лет,
И пусть любовь к нему не проходит.

Припев:
Отцы! Я прошу, не бросайте детей!
Заблудится маленький ангел во мгле.
Отцы! Я прошу, не бросайте детей,
И так много злости на нашей земле.

И вот приходит новый день опять,
Ждет сердце малыша отцовской ласки.
Как можно одиночества желать
Тому, кто жить рожден в чудесной сказке?

Что же сделал, папа, погляди,
Твой сын к тебе напрасно тянет руки.
Забытый дом заволокли дожди.
Нет! Не желайте сыновьям разлуки.

Когда мы вместе, радовался он,
Глядел на папу с мамой улыбаясь.
Отца нет рядом, потерял он сон,
И плачет мать, пред жизнью склоняясь.

Ку – юлташ мар!

Кирлĕ мар юлташ сĕтел хушшинче,
Сисмен чух вăрттăн-харттăн сутсан.
Анлă та сарлака пурнăç çулĕ çинче
Пĕр-пĕччен вăл сана пăрахса хăварсан.

Кирлĕ мар юлташ сĕтел хушшинче,
Пулăшас вырăнне мулкач евĕр тарсан.
Е тата ултава курса тăнă çинче
Шăп-шăпах чĕлхе çĕтнĕн тăрсан.

Кирлĕ мар юлташ сĕтел хушшинче,
Тăшман умĕнче шикленсе пуç тайсан.
Чи яваплă, хĕрӳ самант варринче
Йывăртан хăраса ал памасăр тăрсан.

Кирлĕ мар юлташ сĕтел хушшинче,
Çăкăр-тăвар техĕмне час мансан.
Е тата теприне ăмсанса, пĕринче,
Сан çине килпетсĕр сурсан.

Кирлĕ мар юлташ сĕтел хушшинче,
Укçапа пуяна куç хывса пуç çапсан.
Чăннипе хăй камне манăça кăларса,
Мĕскĕне, нишлине ал сулсан...

Не друг

Не нужен друг лишь только за столом,
Что за предательство держась живет.
И пусть сегодня мы идем вдвоем,
А завтра он меня с другим клянет.

Не нужен друг лишь только за столом,
Он в радости с тобой, в беде – бежит.
И если в жизни вдруг случится слом,
На помощь он к тебе не поспешит,

Не нужен друг лишь только за столом,
В дни бед его кормил ты и поил,
Но как пришлось тебе столкнуться со злом,
Он про твое к нему добро забыл.

Не нужен друг лишь только за столом,
Который все за золото отдаст.
Забывшись в сытости о том, кто он,
Больному старцу руки не подаст.

Çĕнтерӳ

Куççульне шăлать ветеран -
Сипленмест вăрçă кӳнĕ суран.
Çук çумра пĕрле çапăçнă тусĕ,
Ун ӳтне ĕмĕр курăкĕ пуснă.

Хушса юрламалли:
Асрах-ха, асрах çав çулсем,
Асрах-ха хăрушă кунсем.
Асрах-ха Берлин, рейхстаг,
Асрах, асрах Çĕнтерӳ.
Çĕнтерӳ, Çĕнтерӳ,
Ĕмĕр пултăр сăваплă яту.

Асрах-ха, асрах юлашки çапăçу,
Тăшман, çынçиен, тĕп турĕ тусна.
Çакă пулчĕ-шим юлашки курнăçу,
Ют хир варринчех пытартăн ăна.

Ан хурлан, ан кулян, ветеран,
Ун сăнне чунунтах эс упран.
Питĕ шел, иртме çук шăпаран.
Пурпĕрех ан хурлан эс, тăван!

Куççульне шăлать ветеран,
Тӳрленмест вăрçă кӳнĕ суран.
Çук çумра пĕрле çапăçнă тусĕ,
Ун ӳтне ĕмĕр курăкĕ пуснă.

Победа

Вытирает слезы ветеран.
Не проходит рана горькая войны.
Рядом нет друзей-однополчан,
Заросли могилы зеленью травы.

Припев:
Не забыты, не забыты те года,
Не забыть и тех смертельных дней.
Пусть же будет в памяти всегда
День Победы - праздник всех людей.
Этот день священным станет пусть,
Вызывает в сердце радость он и грусть.

Не забыт тот последний бой,
Где пули сражали друзей.
И со встречи той роковой
Прошло будто несколько дней.

Не тоскуй, не горюй, ветеран,
Память в сердце своем сбереги:
И друзей, и военный ваш стан,
От судьбы хоть беги - не беги.

Вытирает слезы ветеран -
Не проходит рана горькая войны.
Рядом нет друзей-однополчан,
Заросли могилы зеленью травы.

Çуралнă кун

Кашни çулах килет çуралнă кун,
Ак çитрĕ вăл каллех.
Кăлт-кăлт тапать хумханнăн чун,
Пурнасчĕ ĕмĕрех.

Хушса юрламалли:
Çуралнă кун! Çуралнă кун!
Тусна эс ырă сун.
Çуралнă кун! Çуралнă кун!
Паян юрлатăр чун.
Эй-й-й, çуралнă кун!..

Кун-çул иртет тесе эс ан кулян,
Ку вăл - пуласлăх сан.
Пурнăç илемне туллин туян,
Малашлăх еннеллех утан.

Аçу-аннӳ, тăван сывă пулсан,
Çитет, пĕтмест мехел.
Çумра ялан тус-тантăшу тăрсан,
Йăл кулнăн сар хĕвел.

День рождения

Каждый год приходит день рожденья,
Больше на одну свечу тушить.
Учащенное в груди сердцебиенье.
Загадай желанье вечно жить.

Припев:
День рожденья! День рожденья!
Пожелай же всем добра.
День рожденья! День рожденья!
Будет праздник до утра.
Эх-х-х, день рожденья!..

Годы мчатся, не грусти ты все же,
Назови богатством их своим.
С каждым годом станет жизнь дороже,
Мы ее по-своему скроим.

Главное, чтоб были все здоровы.
Будем жить на сколько хватит сил.
Если и друзья помочь готовы,
Значит, сбудется о чем ты попросил.

Аннеçĕм

Астумастăп, çывăратчĕ-ши анне?
Ирпеле куçа уçсан та,
Каçхине ыйха путсан та,
Шав ĕçлетчĕ, шав утатчĕ-çке анне.
Астумастăп, тарăхатчĕ-ши анне?
Ĕç тени пĕтмен пулсан та,
Ачисем тарăхтарсан та,
Ятлаçман пуль нихăçан пирĕн анне.

Хушса юрламалли:
Çĕр çултан та, пин çултан та эсĕ пирĕншĕн анне,
Манаймастпăр нихăçан та ачаран ӳстернине.
Çĕр çултан та, пин çултан та эсĕ пирĕн пĕр анне,
Çук манмастпăр ачусемшĕн çутă çăлтăр пулнине.
Аннеçĕм!..

Халь пĕлетĕп, йывăр пулнă аннене:
Ывăл-хĕрĕ чирлесен те,
Мăшăрĕ çĕре кĕрсен те,
Чăтнă-тӳснĕ, пуç усман пирĕн анне.
Халь пĕлетĕп, ăнланатăп аннене:
Чĕпписем ӳснĕ пулсан та,
Вĕсемпе кăмăл уçсан та,
Савнă мăшăрĕсĕр юлнă-çке анне.

Кăмăлтан ырă сунатпăр аннене.
Кирлĕ пек пăхаймасан та,
Йĕртнĕ-макăртнă пулсан та,
Каçарсамччĕ, каçарсамччĕ пепкӳне.
Юратса пуçа таятпăр аннене.
Эпир çылăхлă пулсан та,
Ыр ĕçсем çукрах пулсан та,
Аслă Турă, упрасамччĕ аннене!

Матери

Я не помню, спала ли ты, мама?
Все дела и заботы кругом.
Поутру я глаза открывала, -
Ты уже прибирала наш дом.
Я не помню, чтоб мама сердилась,
Хотя дел было невпроворот.
Ты всегда нами только гордилась:
«Вот помощников сколько растет!..»

Припев:
Через сто, через тысячу лет
Ты всегда будешь нашей мамой.
Не забудем мы твой завет,
Ты осталась звездой лучезарной.
Мама...

Я сейчас понимаю как сложно
Было маме одной нас растить.
Но отца вернуть невозможно,
Его жизни порвалась нить.
Ты, своей не склонив головы,
Все терпела, от горя страдала.
Подрастали твои птенцы,
В их чертах ты его узнавала.

Ты прости нас, прости, родная,
Если что не смогли мы понять.
Лишь добра тебе вечно желая,
Пред тобою склонимся, о, Мать!
В мире нет на тебя похожей,
Всем обязаны мы лишь тебе.
Сохрани нашу маму, Боже,
Помоги ей в нелегкой судьбе.

Манпах

Пĕлетĕн-и, эс халĕ те манпах.
Кашни хусканăвна эп астăватăп.
Илемлĕ сăн-питӳ те асăмрах,
Сана кăна, сана кăна саватăп.

Пĕлетĕн-и, эс халĕ те манпах.
Санпа мăн Атăлăн шывне сăнатăп.
Унтан санпа, санпа кăна çавах
Пăр кайнине кăсăкланса пăхатăп.

Пĕлетĕн-и, эс халĕ те манпах.
Чăваш Юпи ытамĕнче сана куратăп.
Унтан санпа, санпа кăна çаплах
Чун-чĕререн ахăлтатса кулатăп.

Пĕлетĕн-и, эс халĕ те манпах.
Чунра кичем - Лакрей паркне утатăп.
«Чуптумалли кĕпер» те вырăнтах.
Унта, юратăвăм, сана кĕтсе тăратăп.

Пĕлсем, Олег, эс халĕ те манпах.
Эс килмĕн теейместĕп, калаймастăп.
Чĕре кăварĕ хĕмленет санпах.
Сана эп нихăçан та манаймастăп.

Пĕлсем те ĕненсем: эс халĕ те манпах...

Со мной ты

Знаешь, ты все еще со мной,
Помню каждое твое движенье.
Помню я красивый образ твой
И смотрю с любовью, наслажденьем.

Знаешь, ты все еще со мной,
С интересом мы следим за ледоходом,
За могучей Волгой-матушкой рекой.
Стало все светлей с твоим приходом.

Ты все еще со мной, как дивный сон.
Тоска в душе - опять иду в наш лес.
Там «Поцелуев мост». На месте он.
Я жду тебя там из страны чудес.

Не сомневайся: ты все еще со мной...

Саншăнах

Çут хĕвел тухать йăлкăшса-кулса,
Сĕм вăрман кашлать çут куна савса.
Хĕпĕртет-çке чун тăвана курсан,
Телейли çуках эс çумра пулсан.

Хушса юрламалли:
Саншăнах, саншăнах юрлатăп чарăнми.
Саншăнах, саншăнах ĕçлетĕп ывăнми.
Саншăнах, саншăнах ташлатăп ытарми,
Саншăнах, саншăнах юратăп манăçми.

Эс ан сун çынна ырату, суран,
Ырă ĕçӳпе вăйлăрах пулан.
Пĕтĕм халăха çирĕп сывлăх сун,
Хурлăх мар, телей парнелетĕр кун.

Тус-тăваншăн эс çутă çăлтăр пул,
Çăлтăр пек çиççе эс илемлĕ кул.
Ĕмĕр тăршшĕпех тикĕс пултăр çул,
Эс пуçна ан ус, тус-тăванпах юл.

Çут хĕвел тухать йăлкăшса-кулса,
Сĕм вăрман кашлать çут куна савса.
Пит-куç çуталать тăвана курсан,
Телейли çуках çумра эс тăрсан.

Ради тебя

Солнышко снова взошло с зарею,
Лес дремучий радуется дню,
И душа поет, ведь вы со мною, -
Счастливы все мы, повидав родню.

Не желай же горечи и боли,
Бескорыстьем будешь славен ты.
Пожелай здоровья людям, воли,
В новый день пусть сбудутся мечты.

Для родных будь ясною звездою,
И улыбкой освети нелегкий путь.
И дорога будет пусть прямою,
Но друзей своих не позабудь.

Солнышко опять взошло с зарею,
Лес дремучий радуется дню.
И душа поет, ведь вы со мною,
Счастливы все мы, повидав родню.

Кулатăп

Йывăр пулсан та,
Чунăм çунсан та, -
Кулатăп.

Кӳрентерсен те,
Итлемесен те, -
Кулатăп.

Юлташ сутсан та,
Мăшăр сутсан та, -
Кулатăп.

Утаймасан та,
Чупаймасан та, -
Кулатăп.

Ура хурсан та,
Тĕксе ярсан та, -
Кулатăп.

Саваймасан та,
Улталасан та,-
Кулатăп.

Пурнăç пĕтсен те,
Вилĕм килсен те, -
Кулатăп.

Пурпĕр йĕместĕп,
Пурпĕр кулатăп,
Кулатăп...

Смеюсь я

Хоть и трудно мне,
Хоть душа как в огне, -
Смеюсь я.

Хоть и обижают,
Хоть не замечают, -
Смеюсь я.

Хоть друг предает,
В душах злоба живет, -
Смеюсь я.

Хоть взлететь не смогу,
Упаду на бегу, -
Смеюсь я.

Хоть преграды чинят,
За улыбкою яд, -
Смеюсь я.

Не смогу полюбить,
Лаской душу спалить, -
Смеюсь я.

Хоть придет мне конец,
Погребальный венец, -
Смеюсь я.

Слезы нечего лить,
Мне с улыбкою жить, -
От души засмеюсь я...

Тавах

Юратăвăм ман çук ку тĕнчере.
Пĕлетĕн-и, тек халĕ кунта мар.
Ыратăвăм кăна халь çĕр çинче,
Чĕрем çине куллен сапать тăвар.

Хушса юрламалли:
Асаилӳ авăрĕнче анчах ишетĕп.
Унта кăна юратăва шыратăп.
Унта кăна çӳле-çӳле вĕçетĕп.
Асаилӳ ытамĕнче кăна пурнатăп.

Юратăвăм ман çук ку тĕнчере.
Çунса кĕлленчĕ чĕрери кăвар.
Сăнна шыратăп шурă пĕлĕтре, -
Ăçта-ши эсĕ, чунăмри сăнар?

Юратăвăм ман çук ку тĕнчере.
Тепри? Теприйĕ кирлĕ мар.
Санпах вылятăп халь те тĕлĕкре, -
Нихçан та сӳнмĕ ăшăмри кăвар...

Тавах мана юратнăшăн, тавах!

Благодарю

Нет любви моей здесь, на земле,
И душе не обрести покой.
Только боль заявит о себе,
Прикоснувшись вдруг к ране рукой.

Припев:
Все плаваю, кружусь в воспоминаньях,
Лишь там ищу свою любовь,
Лишь там взлетаю ввысь в мечтаньях,
Но нужно возвращаться вновь.
Благодарю за твою любовь, благодарю...

Нет любви моей здесь, на земле,
Все сгорело пламенным огнем.
Я ищу твой облик при луне,
В белых облаках весенним днем.

Нет любви моей здесь, на земле,
Не нужен мне никто другой.
Все с тобою я смеюсь во сне.
Нет, в душе не гаснет облик твой.

Эп килмĕп мар

Сана ман пек никам та ачашлаймĕ,
Ик чакăр куçунтан асамçă пек пăхаймĕ.
Юрату авăрĕнче ишмешкĕн вĕрентеймĕ,
Сана ман пек никам та ӳкĕтлеймĕ.

Хушса юрламалли:
Эп кайрăм та, тен, килĕп-ха каллех.
Сан уттуна кунсеренех сăнатăп.
Эп кайрăм та, тен, таврăнăп пĕрех,
Çӳлтен кашни хусканăвна куратăп.

Сана ман пек никам та сыватаймĕ,
Çӳле-çӳле кашни кун ăсатаймĕ.
Ик чун пĕрлешĕвĕн вăйне те кăтартаймĕ,
Сана ман пек никам та ăнланаймĕ.

Сана ман пек никам та хӳтĕлеймĕ,
Пĕчченлĕх авăрне хупма вăл пултараймĕ.
Юратура кăна вăй илнине пĕлеймĕ,
Сана ман пек никам та аташтармĕ...

Я вернусь

Никто не сможет приласкать тебя как я,
В твои глаза загадочно не взглянет,
Не сможет проводить в любви края,
Где только день, и где цветок не вянет.

Припев:
Не думай, что ушел и не вернусь,
Я за тобою каждый день слежу.
Я не пропал, ты продолжай свой путь,
Ведь сверху я с улыбкою гляжу.

Никто не сможет вылечить тебя, как я,
В полет любви позвать не сможет снова.
Не объяснит сиянье душ - блеск янтаря,
И не поймет, как я, лишь с полуслова.

Никто, как я, не сможет защитить,
Я круг твой одиночества разрушу.
Никто не знает, - лишь любовью можешь жить,
Никто так не заполнит твою душу.

Турă пилĕ

Эй, Турăçăм! Мухтавлă Турă ывăлĕ!
Санăн ятна манмастăмăр эпир.
Ку тĕлпулу - мухтавлă Турă кăмăлĕ,
Эппин пурнатпăр-ха теттĕмĕр эпир.

Шанаттăмăр: çӳлти Аттемĕр пилĕ
Пĕрле уттарĕ мĕн ватăличчен.
Ырă ĕçсем тумашкăн хăват килĕ,
Ĕçлес килетчĕ кăмăл туличчен.

Мĕн-ма çапса ӳкерчĕ Усал çилĕ?
Çӳлти Аттемĕр! Мĕншĕн упрамарăн ывăлна?
Ăçта çухалчĕ шаннă Турă пилĕ,
Мĕн-ма васкатрăн хăвăн чуруна?

Сан ирĕкне кура татах та çӳрĕ
Ун чунĕ çылăх çĕрĕмĕр çинче.
Ман патăма та килĕ унăн чунĕ,
Кĕтеп ăна халь тĕлĕкĕмсенче.

Эй, Турăçăм! Мухтавлă Турă ывăлĕ!
Санăн ятна манмастпăр пурĕпĕр эпир.
Чунсен ĕмĕрĕнче мухтавлă Турă кăмăлĕ
Пулинччĕ. Ун чух, тен, пĕрле пулăпăр эпир...

О, Бог мой!

О, Боже! Всемогущий наш отец!
Мы никогда не забывали твой завет
И знали, эта встреча - твой венец,
И думали, что проживем без бед.

Мы верили в чудесное спасенье:
Позволишь нам вдвоем по жизни плыть,
Даруешь силы и благословенье
Для добрых дел, и нам хотелось жить.

Откуда вторглась эта злая сила?
Исчез благословенья добрый свет.
Всевышний не сберег своего сына,
Зачем его забрал? Дай мне ответ!

О, Боже! Всемогущий наш отец!
Мы никогда тебя не забываем.
Земная жизнь - не вечному конец,
На небесах свою любовь увидим...

Ӑмӑрткайӑк

Ӑмӑрткайӑк вӗçет пӗр-пӗччен, -
Тытмасть юнашар никама вӑл.
Вӗçсӗр-хӗрсӗр тӳпере - ватӑличчен, -
Хӑратмасть ӑна çил-тӑвӑл.

Ӑмӑрткайӑк вӗçет пӗр-пӗччен.
Ан шиклен унран! Саламла! Алӑ сул!
Вӑй-хӑвачӗ пур унӑн хальччен,
Çавӑнпах унӑн халь урӑх çул.

Ӑмӑрткайӑк вӗçет пӗр-пӗччен.
Тӑлӑх тетӗр? Çук, ун хӑйӗн кун-çул.
Пӗчченре телей шырать хальччен,
Унӑн çывӑх тусӗ эсӗ пул.

Ӑмӑрткайӑк вӗçет пӗр-пӗччен.
Шел. Эпӗ мар мӑнаç кайӑк - вӑл.
Сывлӑш касать çунат сӗм каçчен.
Эс ан кай, ан çухал, манпах юл.

Ӑмӑрткайӑк вӗçет пӗр-пӗччен...

Орел

Могучий орел над землею парит,
И нет рядом с ним никого.
Лишь взмахом крыла небеса покорит,
Ничто не пугает его.

Небесный король не покинет свой трон.
Не бойся! Приветствуй его!
Не молод уже, но безмерно силен,
Не свернет он с пути своего.

Парит над землею все так же один,
Ищет счастье свое и мечты.
Сам себе он хозяин и господин,
Близким другом ему станешь ты.

Режет крыльями воздух без устали он,
Жаль – мне сил его не обрести.
Не теряйся, прошу, ведь ты же не сон,
Останься со мной, подожди.

Могучий орел над землею парит...

Ĕмĕт

Ача чух пăхаттăм кайăк картине,
Харăс-харăс вăйлăн сывлăш каснине.
Эпĕ те шутлаттăм вĕсемпе пĕрле
Тӳпене вĕçмешкĕн çӳллĕрен çӳле.

Хушса юрламалли:
Хуçăлчĕ çунатăм, ӳкрĕм çĕр çине,
Виçнĕ чух илемлĕ уçлăх анлăшне.
Хуçăлчĕ çунатăм, вĕçейместĕп тек,
Ах, мĕн-ма-ши пулчĕ çак усал инкек.

Шанăçăм та пурччĕ, ĕмĕтĕм - инçет.
Ăçтан килсе тухрĕ çакăн пек тивлет?
Ырлăха шанаттăм, пулĕ теттĕм шеп,
Ĕмĕр пурăнмалăх чыс тата хисеп.

Таса мар-мĕн пурнăç, таса мар чунсем,
Тахçанах хупланнă пылчăкпа вĕсем.
Ан çухал-ха, шанчăк, инçене ан тар,
Инкекрен, тархасшăн, эс мана хăтар.

Мечта

Помню, в детстве за стаей птиц следила,
Как они по воздуху неслись.
Все наивная мечта не уходила
С ними вместе вдруг подняться в высь.

Припев:
Крылья сломаны, упала я на землю.
Не успела вдоволь в небе полетать.
Лишь теперь я разуму поверю,
Но зачем хотелось мне мечтать?

Верою жила в мечту святую.
Было все моим - и небо и земля.
Птицы, помните ту девочку простую,
Что хотела с вами в теплые края?

Только жизнь не голубое небо.
И врагами стали лучшие друзья.
Из последних сил подняться мне бы
И умчаться в теплые края.

Асамлă вальс

Паян - уяв. Залра илемлĕ.
Мĕн чухлĕ тус-юлташ тата!
Пăхсам: çанталăк та хĕвеллĕ,
Хаваслă, ирĕклĕ чунра.

Хушса юрламалли:
Вальс, вальс, вальс...
Чунра вальс кĕвви янăрать.
Вальс, вальс, вальс,
Кĕвĕ çаплах тыткăнлать.
Вальс, вальс, вальс,
Асамлă кĕвĕ зала асамлать.
Вальс, вальс, ва-а-а-альс...

Тăванăм, мĕншĕн эс салхуллă?
Иртет йăлтах. Йăлтах иртет.
Пулсам кăна кăштах хăюллă,
Тепри сана чунтан кĕтет.

Паян – уяв. Чунра хĕрӳллĕ.
Çатăртатса çунать çурта.
Сăмахăрсем, куçсем чĕнӳллĕ,
Савнатпăр пурте халь кунта.

Дивный вальс

Сегодня – праздник. И прекрасен зал.
Здесь столько собралось друзей, подруг.
Смотри, еще чуть-чуть и грянет бал.
С тобою в танце обойдем мы круг.

Припев:
Вальс, вальс, вальс…
В сердце мелодия вальса звучит.
Вальс, вальс, вальс…
Вальсу внимая, все вдруг замолчит.
Вальс, вальс, вальс…

Прошу тебя, мой друг, ты не грусти.
Пройдет печаль, ты только будь смелей.
Ведь музыка зовет, к ней подойди
И этот танец подари лишь ей.

Сегодня – праздник. И в душе – пожар.
Пусть свечи нам подарят мерный свет.
Пусть всех охватит лишь веселья жар.
Твои глаза мне улыбаются в ответ.

Касрĕç...

Ик çунатăма та касса ячĕç...
Пурччĕ те вĕçмешкĕн шухăш,
«Ан хăтлан, çĕртен ан улăх», - терĕç.

Ик çунатăма та касса ячĕç...
Хăшĕншĕн, тен, çакă пулĕ кулăш, -
Тăрăшаттăмччĕ ишме юхăма хирĕç.

Ик çунатăма та касса ячĕç...
Ыйтаттăнччĕ: «Пĕрле пулмашкăн пулăш!
Пирĕн телее чылайăш хирĕç пулĕç».

Ик çунатăма та касса ячĕç...
Эп каларăм: «Иртнине манма эс тăрăш,
Тус-тăвансем пурпĕр саншăн тăрĕç».

Ик çунатăма та касса ячĕç...
Ураран ура иртме памасть-çке сĕлкĕш.
Мĕншĕн, çут тĕнче, пултăн пире хирĕç?

Ик çунатăма та касса ячĕç...
Пулаймарăм-çке юмахри вутăш.
Ирĕк пурнăçшăн тăма эс ан хăй, терĕç.

Ик çунатăма та касса ячĕç...

Подрезали крылья

Мне подрезали оба крыла...
Не сбылася мечта полетать,
И как все на земле я жила.

Мне подрезали оба крыла...
Что еще от жестокости ждать?
По течению я не плыла.

Мне подрезали оба крыла...
Ты просил: «Я хочу быть с тобой!»
Но судьба против счастья была.

Мне подрезали оба крыла...
Я сказала: «Сразимся с судьбой.
Ведь тебя одного я ждала».

Мне подрезали оба крыла...
Нам мешали друг друга любить.
Я всесильною стать не смогла.

Мне подрезали оба крыла...

Килсемччĕ!

Тĕлĕкре те пулин курăнсамччĕ.
Пĕлтерсемччĕ, ăçта эс çӳрен?
Тĕлĕкре те пулин йăпатсамччĕ,
Темшĕн-тĕр мана кӳренен?

Хушса юрламалли:
Кунтах эп, тусăм, кайман.
Çĕр çинчи ĕçĕме вĕçлемен.
Кунтах эп, тусăм, кайман,
Кунтах, уйрăлман санран.

Тĕлĕкре те пулин килсемччĕ,
Тĕлĕкре те пулин ытала.
Тĕлĕкре те пулин чĕнсемччĕ,
Ан çунтар, ан çунтар чунăма.

Тĕлĕкре те пулин килсемччĕ.
Кулса яр, пăчăрта ытамна.
«Эпĕ - санăн, эс - манăн», - тесемччĕ,
Кирлĕ мар урăх нимĕн мана.

Приходи!

Приходи хотя бы во сне.
Где ты ходишь - тебя расспрошу.
Приходи, так спокойнее мне,
И обид не держи, я прошу.

Припев:
Не ушел, я здесь, любимая,
На земле не закончил дела.
Не ушел, я с тобою, милая,
Нас судьба еще не развела.

Приходи хотя бы во сне,
Нежно-нежно меня обними.
Позови хотя бы во сне,
Но моей души не трави...

Тунсăх

Ача чух чупаттăмччĕ, çарран вĕçтереттĕмччĕ,
Шутламан, пуçра пулман – мĕн кĕтет ыран.
Темшĕн савăнаттăмччĕ, темшĕн хурланаттăмччĕ,-
Пурĕпĕр аван та-çке, ан кулян, тăван!

Ӳсерех шутлаттăмччĕ, хăшĕнчен кулаттăмччĕ,
Ырату пулсассăн та, курăнмасть суран.
Темшĕн хурланаттăмччĕ, темшĕн тарăхаттăмччĕ,
Халĕ асилетĕп те – тĕлĕнсе кулап.

Çамрăк чух эп шухăччĕ, ывăнми чупаттăмччĕ,
Нимĕнле ĕçрен нихçан пĕртте хăраман.
Йывăр чух çунаттăмччĕ, пурпĕрех кулаттăмччĕ,
Çамрăклăхăм, çамрăклăх, мĕншĕн çухалан?

Грустинка

Бегала я в детстве резво босиком,
Не думала о том, что будет завтра.
Но вот грустинка постучалась в дом. -
Ты не грусти, жизнь хороша, ведь правда?

Припев:
Время мое, времечко,
Куда же ты спешишь?
Выросла та девочка,
Что душа грустишь?

Подрастая думала, над собой смеялась,
Хоть и было больно, рана зажила.
Отчего грустила - в сердце не осталось.
Вспомню и смеюсь - вот как я жила.

В молодости устали вовсе я не знала.
Не чуралась, помнится, работы никакой.
Если ж было трудно, - то переживала.
Молодость моя, куда же ты, пожалуйста, постой!

Шăнкăравла!

Ĕненместĕп эпĕ эсĕ çуккине,
Эсĕ ĕмĕрлĕх уйăрăлнине.
Ĕненместĕп эсĕ кайнине,
Чунăма пĕччен хăварнине.

Хушса юрламалли:
Шăнкăравла! Шăнкăравла!
Ман патăма шăнкăравла!
Шăнкăравла! Шăнкăравла!
Эп кашни кун кĕтеп шăнкăравна!

Ĕненместĕп куçăм курнине,
Чунăм татăлса сӳсленине.
Ĕненместĕп аллăм туйнине,
Итлеместĕп çын каланине.

Ĕненместĕп вилĕм пуррине,
Усал вăй чуна пуçтарнине.
Ĕненместĕп эсĕ кайнине,
Йышăнмас сана çухатнине.

Ĕненместĕп эпĕ эсĕ çуккине,
Эсĕ ĕмĕрлĕх уйăрăлнине.
Ĕненместĕп эсĕ кайнине,
Савнине пĕччен хăварнине.

Позвони!

Не верю, что нет тебя на планете,
Не верю, что ушел ты на века.
Не верю, не бывает так на свете.
Душа осталась - словно сирота.

Глаза не верят в пустоту разлуки,
Душа не верит, но рыдает вновь.
И тело мертвое мои ласкают руки.
Не верю я, что умерла моя любовь.

Не верю, что на свете смерть бывает.
Что злые силы отняли тебя!
Не верю! Но без слов душа рыдает,
Что не увидимся с тобою мы ни дня.

Эс ан çухал...

Ку тĕнчере пулать теменччĕ эпĕ юрату.
Ку тĕнчере хуçаланатчĕ теттĕм ырату.
Ку тĕнчере ялан кураттăм эпĕ çухату,
Кĕтмен-туман çĕртен тĕл пултăм Юрату.

Хушса юрламалли:
Эс ан çухал...
Каян пулсассăн та - эс ан çухал.
Тепри пулсассăн та - эс ан çухал.
Чуну кăна пулсассăн та - эс ан çухал.
Эс ан çухал...

Пит-куç çиçет. Тĕлĕнмелле-мĕн хăвату.
Ĕçсем кал-кал. Темрен те хаклă сăнару.
Ах, юрату, ытла та тутлă шерпетӳ.
Ах, юрату, пĕлеп, кĕттермĕ акă ырату.

Асту: пĕрле пултармĕ никама та юрату.
Юратайсан, ытла та тарăн пулĕ сурану.
Эсĕ кайсан, тĕлĕксенче килет халь курăну:
Манпах пуласшăн та - çитмест-çке мехелӳ.

Ку тĕнчере манăн чуна çунтарчĕ ырату.
Леш тĕнчере, шанап, каллех çуралĕ ăнтăлу.
Ку тĕнчере текех кĕтместĕп эпĕ тĕлпулу.
Чунсен ĕмĕрĕнче пулать хăватлă Юрату.

Не теряйся...

Не думала дочь суетного света,
Что кроме боли, ранящей нам кровь,
Врывается, как яркий лучик солнца,
В мороз зимы горячая любовь.

Сияет лик. Твоя могуча сила.
Бесценен для меня твой гордый вид.
Любовь - напиток сладкий - я испила,
Но знаю, что на дне вкус боли спит.

И помни ты: любовь сулит разлуку.
Мы расстаемся - та рана глубока.
Во сне к тебе протягиваю руку,
Но не вернут тебя мне облака.

В этом мире боль терзает душу,
Но я верю, встретимся мы вновь
И тогда преграды я разрушу,
Но в конце найду свою любовь.

Шурă юр

Шурă юр çинче - хĕп-хĕрлĕ юн.
Шурă юр çинче вĕçленчĕ кун.
Шурă юр... Тăлăх юлчĕ чун.
Шурă юр, çынна усал ан сун.

Хушса юрламалли:
Шурă юр! Чĕрене ан çур!
Эс ман пек хурлăх ан кур.
Шурă юр! Чĕрене ан çур!
Шурă юр! Эс манран ан кул.

Шурă юр çине ӳкет куççуль.
Куççуль мар, тумлать вĕри юн.
Шурă юр! Кирлĕ мар ку çул.
Чăтаймасть, çурăлать ман чун.

Шурă юр çинче - сарă чечек.
Кирлĕ мар чечек. Ултав ан сун.
Чунăмра юлман нимле сĕтек.
Эсĕ çук та - кирлĕ мар çут кун.

Белый снег

Белый снег окрашен кровью жестоко.
Белый снег - на нем окончен день.
Белый снег... И сердце одиноко.
На людей свою ты бросил тень.

Припев:
Не напоминай, прошу, о! горе,
Я не излечилась от тоски.
Белый снег! В твоем смертельном взоре
Лишь насмешка. - Сердце на куски.

И на снег вдруг хрусталем прольется
Не слеза. - Горячей крови ртуть.
Я не выдержу, и сердце разорвется.
Белый снег! Не для меня твой путь.

Не обманывай надеждами, не надо,
Что под снегом вырастет цветок.
Знаешь, я весне уже не рада.
Нет тебя, потух мой огонек.

Юратăр!

Тӳпере çăлтăрсем çуталаççĕ,
Саламлаççĕ вĕсем пĕр-пĕрне.
Пуçăмра шухăшсем çуралаççĕ
Çак ытарлă тĕттĕм каçсенче.

Хушса юрламалли:
Иртен пуçласа сĕм каçчен
Юрату çинчен калаçар-и?
Иртен пуçласа мĕн каçчен
Пĕр-пĕрне парăнса юратар-и?

Юрату çук тесен - ан ĕненĕр!
Пурах вăл кашнин чĕринче.
Юратма пĕлмесессĕн - вĕренĕр,
Вăл - асамлă та савăк тĕнче.

Кунçул та иртет, самант та,
Кăмăла пăсас мар вăрçăнса.
Çулсем хăваласа пулсан та,
Пурăнар пĕр-пĕрне юратса.

Юратăр, тусăмсем, хыт юратăр.
Юратсассăн тĕнче çутăрах.
Пĕр-пĕрне ăнлансассăн, ан манăр,
Пурăнма чылай çăмăлрах.

Любите!

Звезды в небесах сверкают
И друг другу шлют привет.
В голове моей мелькают
Мысли, как цветной букет.

Припев:
Начиная с утра и до вечера,
Говорите ли вы про любовь?
Начиная с утра и до вечера,
Любите друг друга вновь и вновь!

Если скажут, то не верьте,
Что на свете нет любви.
Это - лучшее на свете,
Что случается с людьми.

Не таите в сердце злобы,
Быстро мчатся наши дни.
В них и так одни невзгоды,
Берегите же любовь!

Таврăнмасть

Тем пек тилмĕрсен те,
Тем пек хуйхăрсан та,
Тем пек макăрсан та
Таврăнмасть юрату.

Хушса юрламалли:
Пĕлетĕн-и, таврăнмасть юрату.
Юлать чĕрере ырату.
Ĕненетĕн-и, таврăнмасть юрату,
Чĕрене кăшлать ырату.

Тем пек хуçăлсан та,
Тем пек ылхансан та,
Тем пек юратсан та
Таврăнмасть юрату.

Тем пек шантарсан та,
Тем пек пăхăнсан та,
Çунса кĕлленсен те
Таврăнмасть юрату.

Не вернется

Хоть как ни проси,
Хоть как ни грусти,
Скажи хоть «прости», -
Не вернуться любви.

Припев:
Знай же, не придет назад любовь.
В сердце навсегда вошла печаль.
Страшно. Застывает в жилах кровь.
В душу боль вонзается как сталь.

Хоть как ни проси,
Хоть как ни кляни,
Хоть как ни люби, -
Не вернуться любви.

Хоть как ни гори,
Хоть плачь до зари,
Себя не вини, -
Не вернуться любви.

Ан çиллен!

Ан çиллен хушăран калаçманшăн,
Ыратни-çке çакă, ăнлан.
Пур чухне те ачаш пулайманшăн
Ан çиллен, ыйтатăп чунтан.

Ан çиллен ыйтнă пек тăвайманшăн,
Ман енчен çук чару. Кайран
Ӳкĕнетĕп те пуль ал тăсманшăн,
Хальлĕхе таратăп санран.

Ан çиллен йывăр чух тилмĕрменшĕн,
Пĕччен чух чуна хытаран.
Ыйтнă чух эс - юлма пĕлейменшĕн,
Ан çиллен, - таратăп хамран.

Не сердись

Не сердись, что иногда молчала,
Это моя боль - прости, пойми.
Что не ласкова порой... Я замечала.
Не сердись ты на меня, прости.

Не сердись, что сделать не смогла я
Все как ты меня тогда просил.
И не думай, что тебе чужая,
Но идти навстречу нету сил.

Не сердись, когда в тяжелых бедах
Не просила помощь у тебя,
Не осталась на твоих победах.
Не сердись, бегу я от себя.

Юрату вилмест

Юратнӑ çынсем вилмеççĕ,
Вӑхӑтлӑх каяççĕ кӑна.
Каяççĕ те - таврӑнмаççĕ,
Кĕттерсе çунтараççĕ чуна.

Хушса юрламалли:
Юратнӑ çынсем вилмеççĕ.
Юратнӑ çынсем вилсен те пурнаççĕ.
Чунсен тĕнчинче çаврӑнаççĕ.
Юратнӑ çынсем пире курӑнмаççĕ.
Юратнӑ çынсем пире сыхлаççĕ.
Юратнӑ çынсем вилмеççĕ.

Юратнӑ çынсем вилмеççĕ,
Ан вӑрçӑн, ан пул кӑра.
Çӑлтӑрсем сӳнсен - савӑнмаççĕ,
Инкеке ку, ĕнен, сӑна.

Юратнӑ çынсем вилмеççĕ.
Шалти туйӑм хистет пурӑнма.
Каяççĕ те, мĕн-ма таврӑнмаççĕ -
Мĕн-ма шикленеç курӑнма?

Не умирают

Любимые не могут умереть.
Они от нас уходят лишь на время.
Нельзя их образы из памяти стереть,
И душу навсегда сковало бремя.

Припев:
Любимые не умирают.
В сердцах живущих обитают.
И пусть невидимы для нас,
Но рядом с нами трудный час.
Любимые нас охраняют.
Любимые не умирают.

Любимые не могут умереть.
Вы не ругайтесь и не будьте злы.
Звезда на небе, перестав гореть,
С земною жизнью тихо рвет узлы.

Любимые не могут умереть.
Их сила большая, чем смерть, заставит жить.
Хоть и покинули они земную твердь,
Во сне приходят память освежить.

Эпĕ каятăп...

Эпĕ каятăп... Сывă пулăр...
Кӳрентернĕшĕн ыйтатăп каçару.
Айăплине ан шырăр, тăнлă пулăр,
Пуçăрсене ан ватăр. Ку – манăн пуçару.

Эпĕ каятăп. Манран ан кулăр.
Чун-чĕрене хытарчĕ Ырату.
Мана ан асăнăр. Манса ал сулăр.
Пĕлетĕп, чылайăшшĕн ку – пĕчĕк çухату.

Эпĕ каятăп. Эсир ан пырăр – юлăр.
Ывăлăма калам: «Пирченĕ сурану.
Пĕр саншăн пурăнтăм. Ытла та тăвăр
Ку тĕнчере ăнланмасассăн халăху».

Эпĕ каятăп. Ытла усал ан пулăр.
Ăнланăр: пысăк мар ку çухату.
Эп кирлĕ мар кунта, ан тунăр.
Аннеçĕм! Чăн малтан санран ыйтатăп каçару.

Эпĕ каятăп. Сире каçартăр Туррăр.
Ку тĕнчере халь эпĕ ытлашши.
Тăванăмсем! Сăввăмсене халь вулăр, -
Пĕр вĕсенче ман пурнăçăм тĕшши.

Вилтăпри çинче ан йĕрĕр – кулăр,
Чунран калатăп – ку пĕчĕк çухату!
Тус-юрăçсем! Эсир те кулăр, юрлăр!
Вара тин пулĕ маншăн лăплану.

Эпĕ каятăп... Сывă пурнăр...

Я ухожу

Я ухожу… Прощайте, люди…
Простите, если вдруг обидела я вас.
Виновных нет, и Бог рассудит.
Свобода есть у каждого из нас.

Я ухожу… Не смейтесь надо мною.
От боли сердце сделалось сильней.
И дверь запретную без страха я открою,
А вы забудьте про меня сквозь вехи дней.

Я ухожу одна… Вы оставайтесь.
Скажу лишь сыну: «Рана зарастет.
Тобой жила. Забыть меня старайтесь.
Меня не понимает мой народ».

Я ухожу… Жестокими не будьте.
Поймите, не потеря я для вас.
Я не нужна здесь, радуйтесь, ликуйте.
Но, мамочка, прости меня сейчас!

Я ухожу… Простит вас Бог и время.
Я в этом мире лишняя, поверь.
В моих стихах мое живое бремя.
Вчитайтесь в них - для вас они теперь.

Я ухожу… Не плачьте на могиле.
Певцы пусть песни донесут мои,
Чтобы они сердца людей омыли
Добром живительной и радостной любви.

Пĕр эсĕ

Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...
Манаймастăп - чĕрере пĕр эс.
Манаймастăп - тыткăнларăн эс.
Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...

Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...
Сиретĕп юта - чĕрере пĕр эс.
Чунăмра-кунăмра та - пĕр эс.
Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...

Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...
Сывлаймастăп. Пулăшайăн пĕр эс.
Ан кĕттер! Вĕлеретĕн эс.
Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...

Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...
Пурнăç çине хыватăп хĕрес.
Хама валли шыратăп кĕтес.
Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...

Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...
Епле сан патна ман çитес,
Сан тĕнчӳне епле ман кĕрес?
Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...

Только ты

Ты... Только ты... Ты...
Забыть не могу - в сердце ты,
С одним тобою связаны мечты.
Ты... Только ты... Ты...

Ты... Только ты... Ты...
Бегу от чужих в своей судьбе.
И днем и ночью скучаю по тебе.
Ты... Только ты... Ты...

Ты... Только ты... Ты...
Без тебя дышать не смогу.
Не медли! Упаду на бегу.
Ты... Только ты... Ты...

Ты... Только ты... Ты...
На жизни, как и ты, поставлю крест.
Я одинока без тебя, как перст.
Ты... Только ты... Ты...

Ты... Только ты... Ты...
Как же я смогу тебя найти?
Ты меня в свой светлый мир впусти.
Ты... Только ты... Ты...

Эпĕ вăл – эпĕ

Эпĕ вăл - эпĕ.
Çĕр çинче эп – пĕрре.
Эпĕ вăл – эпĕ.
Ан калаç, ан сĕрле.

Эпĕ вăл - эпĕ,
Кĕместĕп чĕрре.
Эпĕ вăл - эпĕ.
Пĕчченпе эп - пĕрле.

Эпĕ вăл - эпĕ,
Вăйлă эп пĕчченре.
Эпĕ вăл - эпĕ.
Эс ан чĕн, ан кĕрле.

Эпĕ вăл - эпĕ.
Хăрамастăп ирпе.
Эпĕ вăл - эпĕ.
Çунатăп çĕрле.

Эпĕ вăл - эпĕ.
Чун-чĕрем - тĕрме.
Эпĕ вăл - эпĕ,
Пултаратăп хĕрме.

Эпĕ вăл - эпĕ.
Çĕр çинче эп - пĕрре...

Я – это я

Я - это я.
На земле я одна.
Я - это я.
Позабудь про слова.

Я - это я.
Не люблю спор пустой.
Я - это я.
Одиночество со мной.

Я - это я.
В одиночестве сильна.
Я - это я.
Не шуми слов волна.

Я - это я.
Утра свет не гоню.
Я - это я.
Вечерами горю.

Я - это я.
Душа - будто тюрьма.
Я - это я.
Могу вспылить и сама.

Я - это я…
На земле я одна…

Сана – Шупашкарăм!

Ырă ир сунатăп, Шупашкарăм!
Вăрансам, хулам! Кĕтеç ĕçсем.
Сан çине пăхать тĕнче, Чăвашăм!
Ан кĕттер! Васка! Иртеç çулсем!

Ырă кун сунатăп, Шупашкарăм!
Тухăçлă, хăватлă пулччăр ĕçӳсем!
Ан ӳркен, ĕçле, ыр çыннăм!
Лайăхпа асилччĕр çĕнĕ ăрусем.

Эсĕ ман мăнаçăм, Шупашкарăм!
Çĕкленеççĕ кунсерен керменсем.
Тĕнчере паян сана, Чăвашăм,
Хисеплеççĕ те чыслаççĕ халăхсем.

Ырă каç сунатăп, Шупашкарăм!
Лăпкă канăр, хаклă ентешсем!
Эс те тĕлĕр, Атăл, юханшывăм,
Тутлă ыйхăра сыхлам-ха, тăвансем!

Тебе – Чебоксары!

Город! С добрым утром, просыпайся!
Ждут нас снова важные дела!
Мир! Приветствуй Чуваша и улыбайся!
Чебоксары! Нас вперед судьба вела.

Чебоксары! Добрый день, мой город!
Пусть во всем сопутствует успех.
Не ленись, Чуваш, для тех, кто молод
Пусть пример твой будет лучше всех.

Чебоксары! Гордость ты для сердца!
С каждым днем растут твои дворцы.
В мир огромный нам открыты дверца.
Все народы станут как отцы.

Чебоксары! Всем желаю доброй ночи!
Отдыхайте с миром, о! друзья.
Вот и Волга закрывает очи.
Охранять ваш сон останусь я…

Пăшăлтату

**Мĕн çинчен пăшăлтатăн, тинĕсĕм?
Хăв ытамунта кама эс асамлан?
Вĕçсĕр вăюпа, тен, хăрататăн?
Е, тен, ĕмĕрлĕх кама-тăр тухатлан?**

**Ирсерен эс лăпкăн чӳхенетĕн,
Кăнтăр çитеспе, тем, пăтранан.
Каç енне кама-тăр эс вăрçатăн, -
Çырана хăватлăн çапăнан.**

**Мĕн çинчен пăшăлтатăн, тинĕсĕм.
Шăппăн-шăппăн кампа юмахлан?
Йăл-л-л! кулан та хашлатса илетĕн, -
Кĕçех, акă, хăватна та кăтартан.**

**Эп пĕлеп: пăшăлтату çак, тинĕсĕм,
Хăпарать-тухать шалтан - чунтан.
Ыратăвна та эс пире паратăн.
Кирлех-тĕк, мăнаçна та кăтартан.**

**Пăшăлтату... Асамлă... Тухатуллă...
Ку - тинĕс... Хура тинĕс умăмра...**

Шепот

О чем ты, море, шепчешь неустанно?
Кого качаешь в ласковых волнах?
Являя дух мятежный, как ни странно,
Ты восхищенье вызываешь лишь в сердцах.

Так мирно плещешь волны по утрам ты,
Но в полдень сходит дрема с твоих век.
Под вечер слышу мерные раскаты,
Когда все гонишь волны ты на б(е)рег.

О чем ты шепчешь неустанно, море?
С кем ведешь свой тихий разговор?
Улыбнешься, счастье лишь во взоре.
Покажи всю мощь на весь простор.

Знаю я, таинственный твой шепот
К нам поднялся из морских глубин.
Свою боль, что нам доносит рокот
Отдаешь, ведь этот мир один.

Шепот… Волшебный… Колдовской…
Это – море… Черное море предо мной…

Пăрахнă теççĕ

Пăрахнă теççĕ. - Эпĕ кайрăм хам.
Куçа хупса иртни çине ал султăм.
Вĕри пит теççĕ. - Тĕрĕсленĕ кам?
Çын сăмахне илтсе асамлăн култăм.

Пăрахнă теççĕ. - Эпĕ кайрăм хам.
Ырра шанса тăрса, кĕтсе шар куртăм.
Усал вăл теççĕ. - Куçусене уççам,
Тен, кирлĕ мар чухне те йăваш пултăм.

Пăрахнă теççĕ. - Эпĕ кайрăм хам.
Мĕн пурринчен пĕр шеллемесĕр тартăм.
Пĕлместĕп, çитрĕ тен усал ылхан, -
Кунçул ытамĕнче пĕччен ак юлтăм.

Пăрахнă теççĕ. - Эпĕ кайрăм хам.
Пĕчченлĕхре çутă пуласлăх куртăм.
Тен, çавăнпах сас-хурапа юлсан
Çын сăмахне илтсе асамлăн култăм.

Пăрахнă теççĕ. - Эпĕ кайрăм хам...

Говорят, бросили...

Говорят, что бросили. - А я сама ушла.
На прошлое свое не оглянулась.
Говорят, горячая. - Молва опять дошла.
Такое слыша, я лишь улыбнулась.

Говорят, что бросили. - А я ушла сама.
Ждала добра, но дождалася горя.
Говорят, я злая. - Они сошли с ума.
И с кем не надо добрая была я.

Говорят, что бросили. - А я ушла сама.
И в одиночестве лишь обрела покой.
И пусть рядят: кому сума, кому тюрьма.
На сплетни я опять махну рукой.

Говорят, что бросили - а я ушла сама...

Кайăксем

Кайăксем те мăшăрăн вĕçеççĕ,
Пĕр-пĕрне пăхаççĕ юратса.
Çын курман асампала кулаççĕ.
Тен, курман нимех те çухатса.

Кайăксем таçта-таçта çитеççĕ,
Çĕр çине пăхаççĕ савăнса.
Юрату курсассăн – именеççĕ,
Чĕрисем илеççĕ кăртлатса.

Кайăксем те темĕн-çке кĕтеççĕ,
Пĕр-пĕрне пăхаççĕ хакласа.
Çуркунне çитсессĕн юр юрлаççĕ, -
Тем каласшăн вăрттăн юптарса.

Кайăксем те мăшăрăн вĕçеççĕ,
Чĕпĕ кăлараççĕ тăрăшса.
Чĕрисем вĕсен те ыратаççĕ
Мăшăрсăр юлсассăн хуçăлса...

Птицы

Даже птицы парами летают,
Вместе, видно, легче им прожить.
Улыбнувшись, счастье воспевают,
Может, не дано им полюбить.

Их полетам не создать границы.
Пусть на землю радостно глядят.
Увидав влюбленных, даже птицы
Только счастья пожелать хотят.

И у птиц, конечно, есть желанья,
Встретить свою пару по весне.
Песней людям облегчить страданья,
Сделать жизнь такой, как в сладком сне.

Даже птицы парами летают,
Гнезда вьют, найдя себе подруг.
Даже их сердца порой страдают,
Оставшись без своих любимых вдруг.

Пулман пулсан...

Эс пулман пулсан
Ирсерен вăраннă пулăттăм
Ĕмĕтсемсĕрех.

Эс пулман пулсан
Пурăнса ирттернĕ пулăттăм куна
Шухăшсемсĕрех.

Эс пулман пулсан
Утнă пулăттăм çĕр тăрăх
Шикленӳсĕрех.

Эс пулман пулсан
Иртĕ кун кунçулĕ терĕç-шим
Хурлăхсемсĕрех?

Эс пулман пулсан
Чун-чĕре юлатчĕ ман
Туйăмсемсĕрех.

Эс пулман пулсан
Кун кунланă пулăттăм, тен,
Куççулĕсĕрех.

Эс пулман пулсан?
Тен, эп пулман пулсан?

Если бы...

Если б не было тебя
Просыпалась бы по утрам
Без мечты.

Если б не было тебя
Без боязни шагала бы я
По земле.

Если б не было тебя
Пропало бы сердце без чувств
Во мгле.

Если б не было тебя
Провела бы дни, что даны мне
Без горьких слез.

Если б не было тебя,
Говорят, был бы усеян мой путь
Лепестками роз...

Ку – пурнăç

Юн тымарне касать пĕри -
Кула-кула.
Парне уçать тепри -
Йĕре-йĕре.

Тăрса юлать çука пĕри -
Выля-выля.
Пуйса пырать тепри -
Суя-суя.

Хуçа пулать пĕри -
Сутса-пуйса.
Лава туртать тепри -
Савса-кулса.

Юн тымарне касать пĕри -
Кула-кула.
Парне уçать тепри -
Йĕре-йĕре...

Это – жизнь

Один, пустив из вены кровь,
Смеется лишь беспечно.
Другой, открыв подарок, вновь
Рыдает бесконечно.

Один, о счастье не узнав,
За занавес уйдет.
Другой, богатства понабрав,
Легко всех обведет…

И господином станет вор,
Что у тебя крадет.
Бедняк же, всем наперекор,
Работая живет.

Один, пустив из вены кровь,
Смеется лишь беспечно.
Другой, открыв подарок, вновь
Рыдает бесконечно.

Украина тата Чăвашстан

Украина, Раççей, Чăвашстан,
Нихăçан вĕсем ним пайламан.
Пайлама сăлтав та пулман,
Украина, Раççей, Чăвашстан.

Харьковра йăва çавăрнă Кокель,
Остерта канлĕх тупнă Çеçпĕл.
Чăвашра ячĕ паллă Збанацкин,
Чăваш ывăлне пехилленĕ Репин.

Халăхăмăр нихăçан аптраман,
Ыр çынна чăваш усал сунман.
Хаклă пирĕншĕн Гоголь та Шевченко,
Космос паттăрĕ Попович, ӳнерçĕ Виктор Ковтун.

Кокеле çапла хисеп тунишĕн,
Çутă та сăваплă ĕçĕрсемшĕн,
Тăвансемĕр, пысăк тав сире!
Ыр хыпар илсе каяр киле.

Украина, Раççей, Чăвашстан,
Нихăçан вĕсем ним пайламан.
Пайлама сăлтав та пулман,
Украина, Раççей, Чăвашстан.

Украина и Чувашстан

Украина, Россия, Чувашстан
Жили дружно во все времена.
Украина, Россия, Чувашстан
Как звучат гордо их имена.

Украины и Чувашии сыновья
Нам отдали талант и признанье,
Репин, Кокель, Збанацкий. Друзья,
Здесь наш Сеспель окончил страданье.

Никому не сулящий зло и обман
Наш народ себе знает цену.
Гоголь и Шевченко дороги нам,
Космонавт Попович, художник Виктор Ковтун.

За уваженье братского народа,
За дружбу и за щедрые дела.
Спасибо вам, пусть в выси небосвода
Всегда звучат лишь добрые слова.

Украина, Россия, Чувашстан
Жили дружно во все времена.
Украина, Россия, Чувашстан
Как звучат гордо их имена.

Университет

Чăваш патшалăх университечĕ!
Вăй-хăвату тапать сан иксĕлми.
Чăваш пĕлӳ çăлкуçĕн ячĕ-шывĕ
Ют çĕршывра кĕрлет халь чарăнми.

Чăваш патшалăх университечĕ!
Аваллăхран пăхать ав йăхташу.
Авал пулман сан пек пĕлӳ çăлкуçĕ.
Ошель, Пăлхар... Пултăр вĕсене те мăнаçу.

Чăваш патшалăх университечĕ!
Пуриншĕн те сан ырă кăмăлу.
Чукотка, Киров, Пушкăрт та Самара, -
Ыттишĕн те сан уçă ытаму.

Чăваш патшалăх университечĕ!
Ĕçчен, хаваслă, туслă сан йышу.
Паллах, Яковлевпа Ульянов ячĕ -
Аваллăхран малашлăха туртан чĕнӳ.

Килсе-тухсан та пурнăç пăтăрмахĕ
Сирме ăна çитет ăсу та хăвату!
Чăваш патшалăх университечĕ!
Тумхахсăр, такăр пултăр çул-йĕрӳ.

Университет

Чувашский госуниверситет!
Нет, не уменьшить твою славу.
Источник знаний, много лет
Известен в мире ты по праву.

Чувашский госуниверситет!
Пусть предки радостно глядят.
Ошель, Булгар… И славы свет,
И память их пусть озарят.

Чувашский госуниверситет!
Твои объятья всем открыты.
Чукотка, Киров… - всем привет.
Самарцы и башкиры не забыты.

Чувашский госуниверситет!
Трудолюбив и дружен твой народ.
Ульянов, Яковлев… Пусть их завет
Нам правильный укажет поворот.

Пусть в жизни много разных бед,
Но хватит сил и отойдет тревога.
Наш Чувашский госуниверситет,
Пусть будет без преград твоя дорога!

Чăваш пуласлăхĕ

Санра чăваш пуласлăхĕ, тăванăм,
Санра вăл хăй пуласлăхне курать.
Эппин, ĕçлер-и çанă тавăрса, çулташăм?
Çапла тума пĕтĕм чăваш ыйтать.

Ăçта паян сан хăвату, чăвашăм?
Хăçан вăл хăй çулне-йĕрне тупать?
Мĕн-ма асаплăн тинкерет çулташăм?
Куççуль авăрĕнче мĕскер-ши вăл шырать?

Ытла та тарăн пулчĕ-шим суранăм?
Аран-аран ентешĕм йăл илет.
Сан асапна, ман Атăлçи Пăлхарăм,
Нивушлĕ тепĕр хут курмах тивет?

Ăçта-ши эс, кĕрнек мăнаç Юманăм?
Санра Чăваш пуласлăхне курать.
Аваллăхран пăхать Ошель, Пăлхарăм,
Чăваш тĕнчи хăй ывăлне сăнать...

Эп – сан хĕрӳ

Ăçта кăна пулман пуль эпĕ халиччен:
Мускав та Питĕр, Хусанпа Ĕпхӳ...
Çӳренĕ тĕнче тăрăх кăмăл туличчен,
Кансĕрлеймен çил-тăвăл та йĕпхӳ.

Аçтăрхана манаймăп. Вăхăт çитиччен
Пулман эп тунсăхлă, пулман салху.
Çӳренĕ урари пушмак çĕтĕличчен, -
Шухăшăмсем нихçан пулман хĕрхӳ.

Çӳренĕ тĕнче тăрăх чунăм каниччен -
Мура çухалтăр пур хуйху-суйху!
Лăпланаймастăп чунăм тухиччен,
Мĕнех тăвам, тĕнче, эп - сан хĕрӳ...

Типнĕ çеçке

Çеçке типсен, камах ăна юраттăр?
Тытаççĕ те, переççĕ кăларса.
Çеçкешĕн кам чĕри ыраттăр?
«Килте çӳп-çап ан пултăр», - теççĕ-ха тата.

Йĕркеллĕ çын ăçтан-ха паян чăттăр?
Йĕри-тавра пĕтĕрĕнет, ав, самана.
Пĕрин, ăслин, чунран каласчĕ: «Тăхтăр!
Çитет! Ан сут хăв тăванна!»

Мĕнех, тепри, чейи, пĕр чарăнми мухтатăр,
Тата, татах çырайтăр панегириксем.
Çапла чеелесех ватăличчен пурнайтăр,
Тен, тупĕ хăй валли те парнесем.

Анчах... Çеçке типсен камах ăна юраттăр?
Этем те. Кирлĕ мар эс - ывăтаççĕ кăларса.
Мухтав юрри-и? Хăть чарăнми янраттăр,
Çӳремелле пулать хăвпа ху тăвăлса.

Çухалчĕç Ырăсем...

«Ӳкессе пĕлнĕ пулсан...», - тенĕ ватăсем.
Мĕн тери ăслă сăмахсем.
Вилессе пĕлнĕ пулсан... Эх, шухăшсем,
Ман чĕрешĕн - çивĕч сăнăсем.

Манчĕç, тем, этем çинчен Ырăсем,
Улшăнчĕç çав пирĕн кăмăлсем.
Чунсене йĕкĕлтеççĕ, кăтăклаççĕ Усалсем,
Сасăсăр йĕреççĕ йăвашсем.

Мĕншĕн усалланчĕç халăхсем?
Лăпланмаççĕ, шав кĕрлеççĕ вăрçăсем.
Ав, тăраççĕ пуç усса тăлăхсем,
Вăранаймĕç «ыйхăран» ашшĕсем.

Вилессе пĕлнĕ пулсан-и? Ыйтусем...
Ир те каç канăç памаççĕ шухăшсем.
Пуçсенче çав-çавах ĕмĕтсем,
Пурăнатпăр-ха тетпĕр. Эх, тăвансем...

Тинĕспе каласçни

Чăваш ташши ташланине курман эс, Хура тинĕс.
Тăпăртатса та ухăнса ташланине курман.
Ярăнайса утса пырать те çапла тикĕс,
Часах, акă, çаптарĕ саккăрла.

Чăваш ташши илемĕпе паллашрăн, Хура тинĕс.
Асар-писер нихçан та вăл пулман.
Каçар, тен, тăваймарăм эпĕ тĕрĕс, -
Ытамунта ташларăм чăвашла.

Чăваш юррин çепĕçлĕхне те илтрĕн, Хура тинĕс.
Чăваш пикин асамлăхне унччен туйман.
Вăрттăнлăхне ăнлантăн питĕ тĕрĕс, -
Сана эпĕ юратрăм хамăрла.

Эс курнă-илтнĕ такама та, Хура тинĕс.
Эс пĕлменни халь нимĕн те юлман.
Çапах та ăнлансамччĕ мана тĕрĕс, -
Янраттарам юрра халь чăвашлах.

Тепре кăна...

Тепре кăна лекесчĕ ытамна.
Тепре кăна сан тутуна ман сĕртĕнесчĕ.
Тепре кăна тĕнче çинчен манса
Ӳтне пĕр чарăнми ман ачашласчĕ.

Тепре кăна илтесчĕ куллуна.
Ик çăлтăр куçунтан халь тинкересчĕ.
Тепре кăна санăн вăйна туйса
Асап-нуша çине шухăшсăрах алă суласчĕ.

Тепре кăна курасчĕ ман сана.
Тепре кăна чунри юрра итлеттересчĕ.
Тепре кăна санăн умна тăрса
Кулса, е, тен, йĕрсе те, юрă янратасчĕ.

Тепре кăна кăтартчĕ сăнарна.
Тепре кăна чунри пăра эс ирĕлтерччĕ.
Тепре кăна чĕре ыратăвне туйса
Хăвпа çӳле-çӳле тата та вĕçтерсемччĕ.

Тепре кăна... Тепре кăна... Тепре кăна...

Çĕр-Аннемĕр

Лăш-лăш-лăш! çăвать ăшă çумăр,
Кăмăлтан йышăнать Çĕр-Аннемĕр.
Сĕткенсĕр юлсан - чунра та ăмăр.
Ăнланăр ăна: шăварăр, хĕрхенĕр.

Тем анлăш тĕнче - пурпĕр тăвăр.
Чунри тĕрмене пĕр шелсĕр çĕнтерĕр.
Кирлех-тĕк, - куççуль витĕр кулăр.
Сăнчăра, кирлĕ мар вăл, - аркатăр.

Пĕр шиксĕр сĕткен авăрне путăр,
Кирлине ыйтма хăюлăх çитерĕр.
Суя именӳ çинчен вăхăтлăх манăр.
Типнĕ чуна черченпе тек шăварăр.

Лăш-лăш-лăш! çăвать ăшă çумăр.
Тарават йышăнать Çĕр-Аннемĕр.
Уççăн, ирĕк сывлатăр кăкăр,
Хытса ан пирчетĕр чĕремĕр.

Сирте – малашлăх

Шăпа тени кашнин хăй евĕр,
Кун-çул сакки кашнин расна.
Пĕрин - алра ялан кĕлентĕр,
Ним вырăнне хумасть çынна.
Тепри вара, пыл хурчĕ евĕр,
Тупать телей ĕçре кăна.
Кун пек чухне вара, пĕлетĕр,
Пыл мар, сив шыв пырать чуна.
Мĕнех, калаччăр: "Эс - çĕр хурчĕ,
Эс тивĕç мар çут кун курма.
Сана валли - чухăн кил-çурчĕ,
Ан пăх, ан хăй çутта тухма!"
Тепри вара? Вăл - укçа хурчĕ,
Пĕлмест çын евĕр йăл! кулма.
Нухрат сан çук-и? Эппин сурчĕ,
Эс тивĕç мар унпа пулма.
Çук, çук, çимест вăл хура çăкăр,
Ĕçре сан пек тар кăлармасть.
Ун пек çынна, асту, ан сăхăр,
Кирлех-тĕк, нимĕн хăвармасть.
Çук унăн тус-тăван, йăх-несĕл,
Пĕчченлĕхре эп вăйлă, тет.
Анчах çакна пĕлмест: çынсемсĕр
Пĕччен вăл пурпĕрех пĕтет.
Пуçра ун - ресторан та шашлăк,
Умра - гранат та ананас.
Мĕнех, ялан çапла пулас-тăк
Мĕн-ма-ха уншăн кулянас?
Анчах чунран капла мĕн юлтăр

Пурте укҫа чури пулсан?
Куҫҫульсĕр йĕрĕ Çĕр-Аннемĕр
Никамсăр, хӳтлĕхсĕр юлсан.
Аллăмăрта - малаш, пуласлăх,
Кам аллинче вăл? Кам хуçи?
Сирте, янташăм, тен малашлăх,
Сирте тен ĕмĕрсен уççи?
...
Шăпа тени кашнин хăй евĕр,
Кун-çул сакки кашнин расна...

Самана

Эй, самана! Ăçта илсе çитерĕн?
Тата мĕнле асап кăтартăн малашне?
Мĕн-ма çак таранччен упрарăн,
Кăтартăп терĕн-и чăн пурнăç тутине?
Ăçта ан пăх - выç кашкăрла вăрçаççĕ,
Ăçта ан пăх - ĕмеççĕ, çаратаççĕ çынсене.
Унта - хывăнтараççĕ, мăшкăллаççĕ,
Кайран - кайран сураççĕ нар питӳ çине.
Эй, самана! Ăçта пырса тухатпăр?
Нивушлĕ пирĕн юлчĕ халь пĕр çул?
Тĕпсĕр çырма умне пырса тăратпăр -
Нивушлĕ çуккă пирĕншĕн ыр çул?
Тус-юлташсем! Мĕне эпир кĕтетпĕр?
Пĕтерччĕр тетпĕр-шим чи ыррине?
Чун-чĕресем пăрланчĕç пирĕн, курăр,
Çын асапне шута илместпĕр ниепле.
Ăçта тăван? Ăçта йăх-несĕл?
Манатпăр, пытанатпăр вĕсенчен.
Хальхи саманара пĕчченлĕх
Сыхлать, упрать мĕнпур усалсенчен.
Эй, Атте Турăçăм! Çеттуй Мария!
Шанмастпăр сирĕнсĕр тек никама.
Çĕршыв пуçлăхĕсем ахаль çынна - сураççĕ?
Мĕнпур ăçтиçука пуçтарнă хăй тавра?

Çак нишлĕхре телей çинчен калаçмăп.
Ку пулĕччĕ хамран кулни пекех.
Пурĕпĕрех çутă куна шанатăп.
Вăл килетех... Вăл çитетех...

Пĕлсе тăр

Ăçта мĕн каласса пĕлсе тăр.
Мĕн пуласса курса тăр çивĕч куçсемпе.
Пĕри санран кулать пулсассăн - култăр.
Пул ăслăрах! Ан хирĕç вĕсемпе.

Пул тимлĕрех! Асту: паян вăл - пултăр,
Мухтать, çĕклет ав çуллă чĕлхипе.
Ыран вара /хăвăр ĕнентĕр, куртăр/,
Кавар тăвать. Улăштарать çеç тепринпе.

Пул чеерех! «Ухмах ку!» - тесе суртăр
Хăйне хăй мухтаса тепри нишлĕ чунпа.
Кирлех-тĕк сив сăмах та сартăр, -
Пул вăйлăрах! Ан виç вăй усалпа.

Ăçта мĕн пуласса туйса тăр.
Усал пулсан та тавăр ырăпа.
Тасалăх вучĕпе чуну сан çунтăр,
Тепри йĕкĕлтесен те вĕчĕх сăмахпа.

Ентешĕмсене – Канашсене

Куç тулли эс, тăванăм, паян.
Туслăхра, ентешĕм, чунпа вăйланан.
Халăхпа пĕрле чух чуну та пуян,
Çĕклен, Канаш ен, хăватлан!

Канаш ывăл-хĕрĕ! Тинкер те – куран,
Алран тытăнса малалла талпăнан.
Пур Костина пирĕн, вăй пур-ха Петрован,
Сарри, Сарине... - сасси янăрать пăрчăканăн.

Укçа та тăваççĕ, çынна та сиплеççĕ,
Ташлаççĕ, юрлаççĕ вĕсем - Канашсем.
Хаçат кăлараççĕ, шкулта вĕрентеççĕ,
Кил-çурт хăпартаççĕ - каллех Канашсем.

Куç тулли эс, тăванăм, паян.
Туслăхра, ентешĕм, чунпа вăйланан.
Халăхпа пĕрле чух чуну та пуян,
Çĕклен, Канаш ен, хăватлан!

Вăхăт çитмен

Çĕр çинчен кайма ман вăхăтăм çитмен,
Палăртнă тĕллевĕме эп вĕçлемен.
Пурнăçран лайăххине нихçан кĕтмен,
Тен, çапла тума вăй-халăм çитеймен.

Çĕр çинчен кайма ман вăхăтăм çитмен,
Тăван халăхăмшăн юнăм сивĕнмен.
Ырă ĕмĕт, шухăш-кăмăлăм пĕтмен,
Чăвашсемшĕн кунçула эп хĕрхенмен.

Çĕр çинчен кайма сан вăхăту çитмен,
Тус-тăванна ырлăх лекеймен.
Тăван халăхшăн асап-нуша иртмен,
Тĕрĕслĕх кăвайчĕ чунра сӳнеймен.

Çĕр çинчен каймашкăн
пирĕн вăхăт çитеймен...

Алă сул та...

Алă сул та - уттар малалла,
Иртни пурпĕрех таврăнмасть.
Çук пулсассăн - пĕрех тупăнмасть.
Ан хурлан, ан тинкер каялла.

Алă сул та - пăхсам кунталла.
Куççуль витĕр хĕвел курăнмасть.
Пĕччен пурăнса чуну лăпланмасть.
Ан типсем! Туртăнсам çуттaлла.

Ан кĕреш, алă сул тăшманна, -
Ун усалĕ сана çыпçăнмасть.
Эс пулсам вăйлăрах! Пăсаймасть
Вара чурăс çын кăмăлна.

Алă сул та - чуптар малалла!
Пурпĕрех, асту, никам пулăшмасть.
Саншăн паян кун никам тăрăшмасть, -
Асту та çакна, сывла "паянла".

Алă сул та - вĕçтер малалла!..

Ыйтмастăп нумай

Пуррипе çырлахса пурăнма тăрăшатăп,-
Эп ыйтмастăп нумай.
Çук паян, - ыран пулĕ, пĕлетĕп, -
Кĕтме тивмĕ чылай.

Чунăмри усала ырăпа тилмĕретĕп:
“Эс пулсамччĕ йăваш.
Вара эпĕ те майĕпен лăпланатăп,
Пур, тен, манăн малаш?”

Çырлахма кирлĕ мар, ăнланатăп,
Чунра çунтăр кăвар!
Вăйсăрри те кирлех, йышăнатăп, -
Умра урăх сăнар.

Вăл та ку çитмест, чуна хытаратăп,
Ытти пулĕ кайран.
Леш тĕнчере урăха хаклаççĕ, пĕлетĕп,
Иртейместĕп унран.

Пĕччен çулçă

Вĕлтĕрти сарă çулçă
Вĕлтĕр-вĕлтĕр туса,
Çаврăнса-пĕтрĕнсе,
Унталла-кунталла сулăнса
Çĕр çине анса пычĕ.

Вĕлтĕрти сарă çулçă
Ал-ураллă пулса,
Çын шайне çитейсе,
Çĕре мар, çӳлеллех туртăнса
Пурăнмах ĕмĕтленчĕ.

Вĕлтĕрти сарă çулçă
Пĕр йĕрсе, пĕр кулса,
Çут хĕвел çине тинкерсе,
Çĕнтерме çуккине ăнланса
Вăйран кайнăн хутланчĕ.

Вĕлтĕрти сарă çулçă
Чунтан тăрăшса,
Çӳлеллех кармашса,
Вăйсăр юлнине ăнланса
Шăпланчĕ, хĕрелчĕ.

Вĕлтĕрти сарă çулçă
Шăпине йышăнса,
Пурнăçа ал сулса,
Чунĕпе татăлса хурланса
Çĕр çине персе анчĕ...

Мĕн тăвам?

Макăрăттăм ӳлесе -
Пурпĕрех никам та илтмĕ.
Лартăттăм та кӳренсе -
Пур-çук çиллĕм çитмĕ.

Макăрăттăм хӳхлесе-
Куçăмри куççулĕм типрĕ.
Кăшкăрăттăм тарăхса -
Пур-çук вăйăм çĕтрĕ.

Эп пĕлмес...

«Эп пĕлмес»...
Ик сăмах пĕлтерĕшĕ
Пуш-пушă.
Çак сăмах пĕлтерĕшĕ
Пит хурлă.

«Эп пĕлмес»...
Ман ĕç мар текен каларăш
Пек пуш-пушă.
Сисĕнет тӳрех сив варкăш, -
Пулаймăн пурлă.

«Эп пĕлмес»...
Çапла çав, сăмах çаврăнăш
Ытарлă.
Çăмăл та. Мĕнех,
Пулмăн яваплă.

«Эп пĕлмес»...
Тĕрĕсне калам-и?
Эс - хăравçă!..

Çын усалне курса...

Тепре кăна сан ытамна лексе,
Куçа хупса, чун-чĕрене уçса,
Шухăшпала тĕпсĕрлĕхе вĕçсе,
Самантлăха пулсан та асамласчĕ.

Хушса юрламалли:
Тепре кăна вĕçесчĕ,
Тепре кăна çунасчĕ,
Тепре кăна çын усалне курса,
Чун-чĕререн ахăлтатса куласчĕ...

Тепре кăна пурин çинчен манса,
Çĕр усалне хăюллăн ал сулса,
Тăшмансене куçран пăхса,
Сана кăна асамлăн тыткăнласчĕ.

Тепре кăна сан ачашна туйса,
Сан чĕрӳне шала-шала кĕрсе,
Сана пĕр эпĕ кирлине курса,
Вăхăтлăха пулсан та лăпланасчĕ.

Тепре кăна сан хăватна илсе,
Çумран хăпман ыратăва манса,
Санпа пĕрле çӳле-çӳле вĕçсе,
Мăнаçлă юрату кĕввийĕ шăратасчĕ.

Кайрăн...

Кайрăн...
Уйрăлчĕ асаплăн хурлă чун...
Пĕр кĕтмен çĕртен тĕттĕмленчĕ кун.

Кайрăн...
Лăплансам, тăван, ытла ан çун...
Малашне санăн пулĕ урăх кун.

Кайрăн...
Ырă ĕçӳсем нумай, ан тун...
Вĕсене кура канăç куртăр чун.

Кайрăн...
Пит кĕске-мĕн Турă панă кун...
Каçарсам, вĕрентекен, усал ан сун.

Кайрăн...
Ыраттартăн...
Хурлантартăн...

Пĕр мана

Пĕр мана асăрха.
Пĕр мана кăмăлла.
Тепри ăмсансан та -
Пĕр мана, пĕр мана асамла.

Пĕр мана ытала.
Пĕр мана ачашла.
Теприйĕ пулсан та -
Пĕр мана, пĕр мана çупăрла.

Пĕр мана эс шыра.
Пĕр мана эс хакла.
Теприйĕ кĕтсен те -
Ирсерен пĕр мана саламла.

Пĕр мана эс шыра.
Пĕр манпа эс выля.
Теприйĕ çунсан та -
Тĕлĕкре те мана ачашла.

Манаймастăп сана...

Эс – Шанăçпи

Ăнлан эс, Шанăçпи, çакна:
Паян сăпайлăх кирлĕ мар,
Паян тасалăх хакра мар. -
Ан йышăн, Шанăçпи, çакна.

Ку тĕнчере пӳлеç çулна,
Çунаттуна касаç ним мар.
Кулать пулсан та вăл - çын мар.
Ан ĕненсем - упра чунна.

Пĕлсем эс, Шанăçпи, çакна:
Пĕрин чунра çунать кăвар,
Тепри унта сапать тăвар.
Ан улталан: шан пĕр хăвна.

Куратăп, Шанăçпи, вăйна:
Çепĕçлĕхре вăл, вăйра мар.
Асамлăхра санăн тымар.
Чун илемне паран çынна.

Вăрттăнлăхна уçсам тусна.
Эпир те сан пекех пулар.
Вăйсăрлăхран пĕрле кулар.
Эс - Шанăçпи. Ан ман çавна!

Кам каларĕ..

Кам каларĕ сана эп таврăнмăп тесе?
Усал хыпар сарма епле вăл хăйнă?
«Вăл вилнĕ, хăратаймĕ тек», - тесе,
Пĕлсем, ман ылттăнăм, чĕлхи ун суйнă.

Хушса юрламалли:
Ăçта эсĕ, Ыратăвăм, ăçта?
Камшăн куçусем çаплах çиçеççĕ?
Камшăн-ши чĕрӳ кăлт! кăлт! тапать?
Камшăн-ши çаплах эс тунсăхлатăн?

Юратăвĕ ун çук çумра тесе,
Епле вăл сан çумна çыпçăнма пăхнă?
Юлташĕ çук, вăл хӳтлĕхсĕр тесе,
Таса çинчех элек сармашкăн хăйнă?

Пĕччен эс, тусăм, çĕр çинче тесе,
Унччен эп мар, ман чун-чĕре каланă.
Эс мансăр, пĕр-пĕччен юлан тесе,
Ăçтан-ха эп шухăшлама пултарнă?

Кам каларĕ сана эп таврăнмăп тесе?
Çур чĕре санпах, санпах-çке юлнă.
Ан хуйхăр Арасланăм çук тесе,
Пĕлетĕп: йывăр чух ялан эс кулнă.

Ĕмĕрлĕх мар...

Нимĕн те ешмерест ĕмĕр-ĕмĕр...
Паян, ак, илем куçа илĕртет.
Çитет те ыран - çанталăк ăмăр,
Тунсăх кĕввийĕ чуна хӳпĕрлет.

Нимĕн те ешмерест ĕмĕр-ĕмĕр...
Йывăç-курăк тухать те - типет.
Этем те. Пурăнма пур та кăмăл,
Çӳлти вăй хушсассăн - сӳнет.

Нимĕн те ешмерест ĕмĕр-ĕмĕр...
Пурччĕ те кăмăл йăваш пурăнма,
«Ку пурнăçра юрамасть пулма сапăр», –
Тесе пуçларĕç тӳрех хăтăрма.

Нимĕн те ешмерест ĕмĕр-ĕмĕр...
Юрать-шим усалăн чуна таптама?
Пулаймĕ куçа хупасси манăн кĕçĕр,
Вăхăт усала тамăка ăсатма.

Нимĕн те ешмерест ĕмĕр-ĕмĕр...
Туйăмсем те. Кирлĕ мар унпа вылянма.
Пурнăç – хăналăх. Кĕске пирĕн ĕмĕр,
Кирлех-ши çынсен чарăнми вăрçăнма?

Нимĕн те ешмерест ĕмĕр-ĕмĕр...

Эсĕ – ман Акăшпи

Çĕр çине килет çĕнĕ чун,
Кăмăлтан ăна ырă сун.
Эп пĕлеп, эсĕ ман çутă кун,
Саншăнах юрлать манăн чун.
Эп хатĕр кĕмешкĕн вута,
Эп сикĕп пĕр шиксĕр шыва.
Ман чĕре - сан чĕрӳн çурри,
Саншăнах тапать чарăнми.

Хушса юрламалли:
Çут хĕвел тухать кунсерен,
Сар шевли ӳкет сан çине.
Саншăнах куç уçап ирсерен,
Саншăнах çунать чĕре.
Саншăнах, саншăнах...

Саншăнах эп пулам Арăслан,
Эсĕ, тен, ачаш Акăшпи?
Кирлĕ мар ырату, суран,
Ачашлап сана кăмăлтан.
Саншăнах ӳсеç ачасем,
Ыталаççĕ савса ашшĕне.
Ах, мĕн-ма çунтараç туйăмсем?
Сан питне ачашлап ирхине.
Саншăнах, саншăнах...

Пĕлĕтсем

Ăçта васкатăр, пĕлĕтсем? Ăçта чупатăр?
Кам хуйхине илсе каятăр-ши пĕрле?
Унтан, çӳлтен, çын инкекне сăнатăр?
Е, тен, йĕретĕр эсĕр те çĕрле?

Ăçта васкатăр, пĕлĕтсем? Ăçта чупатăр?
Мĕн-ма-ха шăпăрт? Кĕрле-кĕрле
Хура кĕрпе, тен, хушăран вылятăр?
Е, тен, илетĕр ман чуна пĕрле?

Ăçта васкатăр, пĕлĕтсем? Ăçта чупатăр?
Ан хăрăр! Ӳкместĕр пурĕпĕр çĕре.
Çĕр çылăхĕсене çӳлтен кăна куратăр.
Эпир вара çĕкленейместпĕр, ав, çӳле.

Ăçта васкатăр, пĕлĕтсем? Ăçта чупатăр?
Илсемĕрччĕ пĕрле! Çитерĕрччĕ киле!
Йывăрлăхран эсир те, тем, таратăр?
Чупас-и-мĕн хыçран ӳле-ӳле?

Ан васкăр, пĕлĕтсем! Ан чупăр!
Пĕччен чухне кĕрес килмест киле.
Унта - пуш-пушă. Каçсерен йĕретĕп.
Е, тен, йĕретĕр эсĕр те пĕрле?

Ан васкăр, пĕлĕтсем, ан чупăр!..

Уçă çил эпĕ

Уçă варкăш çил пулса
Сан питне сĕртĕнесчĕ.
Юрату хĕлхемĕ пулса
Туйăмсен авăрне вирхĕнесчĕ.

Хĕвел пайăркийĕ пулса
Пит-куçна кăтăкласчĕ.
Сан туту çине ларса
Чарăнми чуптуса антăхасчĕ.

Ешĕл хурăн çулçийĕ пулса
Пăшăл-пăшăл тăвасчĕ.
Симĕс чатăр çине выртса
Антăхса савăшасчĕ.

Тӳпери шур пĕлĕт пулса,
Санран юлас марччĕ.
Тĕлĕкне пĕр вĕçĕм пырса
Санпах пĕрлешесчĕ.

Юмахри Вутăшпи пулса
Ачашпа илĕртесчĕ.
Эс шыранă Акăшпи пек пырса
Чунна çемçетесчĕ.

Тен, ĕмĕрхи ĕмĕлке пулса
Сан ăшна вырнаçас?
Сан чунна шухăшра кĕрсе
Ĕмĕре тыткăнлас?

Эсĕ кай...

Кала-ха, мĕн-ма тепринпе улталарăн?
Пуянрах,вăйлăрах-и вăл, тен?
Мĕн çитмест, мĕн-ма аташатăн?
Ачашлать çепĕçрех ирсерен?

Хушса юрламалли:
Куççульне мана ан кăтарт -
Пурпĕрех ĕненместĕп.
Çук çĕртех улталарăн -
Тек сана каçармастăп.

Килместĕн пулсан, мĕн-ма шантаратăн?
Шыратăн сăлтав çук çĕртен.
Çук, суян, эппин улталатăн.
Манатăп сана çак хĕлтен.

Тепри лайăхрах? Ĕненместĕп.
Аташан эппин. Санран кĕтмен...
Тепри ачашрах? Кураймастăп.
Сивĕтет сана вăл килтен.

Çепĕçрех пулмалла? Ăнланатăп.
Йăлăхтартăм кĕтмен çĕртен.
Эппин, мĕншĕн чуна тыткăнларăн?
Ирĕке ярас пулнă хальччен.

Паянтан пысăк пăнчă лартатăп.
Санран мар, пулăшу ыйтатăп хĕлтен.
Пурпĕрех чунăмпа тепре çĕкленетĕп.
Эсĕ кай. Чармастăп. Ĕнен...

Ӑна ан тив!

Эй, Турӑҫӑм! Ӑна тивме ан хӑй!
Ун вырӑнне мана эс йышӑнсамччӗ.
Эй, Турӑҫӑм! Ӑна, ӑна кунтах хӑвар,
Мана вара эс тамӑка ярсамччӗ.

Эй, Турӑҫӑм! Итле! Эп - ҫӑмӑлттай,
Чун-чӗрене вутра ҫунса ман тасатасчӗ.
Эй, Турӑҫӑм! Ӑна, ӑна вара кунтах хӑвар,
Ун тупӑкне курса куҫҫуль кӑларас марччӗ.

Эй, Турӑҫӑм! Ӑнлан! Ман хӑвӑртрах каясчӗ.
Чарсам ман юнӑма унта-кунта чупма.
Эй, Турӑҫӑм! Ҫут тӗнчепе сывпуллашасчӗ.
Пар ҫӑмӑллӑх, пар ... вилӗм эс мана.

Иртет кунçул

Тĕнче тивлечĕпе иртет кунçул,
Ырри, усалĕ - пурте пур, ан кул.
Паян пĕри кӳрентерет, ыран - тепри,
Пурне те тӳсĕмлĕн чăтать этем чĕри.

«Çынна ан кӳрентер, сăпайлă пул,
Ăна эс сун тип-тикĕс такăр çул!» -
Шав вĕрентет чунри анне сасси,
Унпа курнать пек уççăн пуласси.

Кашни çын чĕринче пулсан çак пил,
Пур çут тĕнче пулатчĕ тăван кил.
Анчах ялан çука юлать ырри,
Пуç каçăртать хури те начарри.

Тус-тăвансем! Кирлех-ши пире мул
Чĕре çинче пулсассăн йывăр чул?
Пуç çапар мар нихçан пуянлăха,
Хаклар-и çынсенче тасалăха?

Кӳршӗ каччи

Пăхрăн та каларăн, юрататăп терӗн,
Шантăм эпӗ савни сăмахне.
Ак, кӗҫех пуҫларăн, ан кил урăх терӗн,
Улăштарчӗ савни хăйӗн сăмахне.

Хушса юрламалли:
Чавса ҫывăх - ҫыртма йывăр, ӳкӗнӗн кайран,
Урăххипе ҫуммăн утăп, чечек кăшăлӗ парнелӗп,
Савнине телейлӗ тăвăп, урăххипе улăштармăп,
Санăн куҫҫульне пăхмастăп эпӗ те кайран.

Ах, савни-савниҫӗм, ма апла хăтлантăн?
Ма ют турăн эсӗ кӳршӗ каччине?
Ах, савни-савниҫӗм, мӗншӗн чунсăр пултăн,
Ыттисем ҫитмеҫҫӗ кӳршӗ каччине.

Ҫын аллинчи кукăль пысăкрах курнать,
Йӳҫӗ япала та пылакрах туйнать.
Юттипе пулайăн-ши эс телейлӗрех?
Пуррине тиркетӗн, чунăм, ахалех.

Чунăм халь лăпланчӗ, ҫунчӗ те кӗлленчӗ,
Юрату кăвайчӗ хӗмленмест халь тек.
Эсӗ те телейсӗр, леш пăрахрӗ, тарчӗ,
Урăххи ун халӗ, ачашлаймăн тек.

Пур чухне ан сивлӗр, тус-юлташлă пулăр,
Юрату е туслăх - палăрӗ хăех.
Ăслăрах та пулăр, хитрене ан пăхăр,
Савмаллах, тен, пулнă кӳршӗ каччинех.

Салам!

Эс тесех хуса çитетĕп те ăна васкаса,
Чарăнма ыйтса ачашшăн сĕртĕнетĕп.
Такам мар, пĕр эсех тесе шутласа,
Куçăмри асамлăхпа тинкеретĕп.

Хушса юрламалли:
Салам! Салам!
Çынсем урлă сана кăшкăратăп.
Салам! Салам!
Хам чупатăп çаплах, такăнатăп.
Пурпĕрех чарăнми кăшкăратăп:
Салам! Салам!
Сала-а-а-ам! Салам...

Эсĕ мар. Урăххи. Тăратăп çаврăнса.
Ним тума аптраса пăлханатăп.
Мĕншĕн эсĕ мар тесе хурланса
Сана мар, пĕр хама ӳпкелетĕп.

Ак, каллех, каллех пăхатăн йăл кулса,
Ан васка! Тăхта! Ан кай! Тилмĕретĕп!
Ытала! Ачашла! Юратса
Тĕлĕкре кăна халь савăнатăп.

Куç уçатăп ирсерен сана кĕтсе,
Шухăшпа сан таврах çаврăнатăп.
Эс - манпах! Эп - санпах! Çакна пĕлсе
Хама хам чунăмпа лăпланатăп.

Ӗмӗрсем урлӑ

Ӗмӗрсем урлӑ сана сӑнарӑм.
Сан сӑнна кашни çынра шырарӑм.
Сан сасна ӗмӗрсем урлӑ илтрӗм.
Сан чунна пыл хурчӗ пек пуçтартӑм.

Ӗмӗрсен кӗрлевӗнче чуну мана шырарӗ.
Ман чунпа пулас тесе ниме пӑхмарӗ.
Юратма пӗлейменни - сӗрлерӗ...
Ӗмӗрсен сасси çакна илтмерӗ.

Ӗмӗр урлӑ сан çине тинкертӗм.
«Эсӗ мар-ши Тур çырни?»- тесе пуç ватрӑм.
Ӗмӗрсен çил-тӑвӑлне сирсе хӑвартӑм.
Чунӑма юратупа çунтартӑм.

Ӗмӗрсен хистевӗ иккӗне те шеллемерӗ.
Ӗмӗрсен ӑслайӗ никама та пулӑшмарӗ.
Ӗмӗрсен усалӗ туйӑма чӑл-пар аркатрӗ,
Никама та çут хӗвел кӑтартмарӗ.

Ӗмӗрсем урлӑ каллех сана шыратӑп.
Сан чунна куç хупмасӑр кӗтетӗп.
Ӗмӗрсем урлӑ куççуль йыхравӗ яратӑп.
Пӗлетӗп. Сан чунна пурпӗрех тӗл пулатӑп...

Тĕлĕк мар

Тен, ку тĕлĕк? Е чăн?
Çĕр айне кĕрсе выртрăн.
Çĕтрĕ саншăн çут кун,
Асилӳ пулса юлтăн.

Тĕлĕк мар ку, - чăнни,
Сив ӳтне сĕртĕнетĕп.
Ах, ăçта-ши, ăçта-ши иртни?
Шухăшпа каяллах таврăнатăп.

Эпĕ – ирĕк кайăкĕ

Эсĕ - ман тĕлĕк,
Манăн ырату.
Манăн çухату та
Йӳçĕ ӳкĕнӳ.

Эпĕ пулнă суккăр,
Пулнă ачапча.
Пулнă айванкка та,
Пăхнă аякка.

Эсĕ усă куртăн,
Хуçрăн çуната.
Сисрĕн ачаша та
Илтĕн тыткăна.

Эсĕ - иртнĕ вăхăт.
Кирлĕ мар тĕрме.
Акă кайăк пулăп та
Вĕçĕп инçене.

Эпĕ - ирĕк кайăкĕ,
Çук манăн хăлат.
Кĕçех вĕçсе кайăп та
Тупăнĕ хăват.

Кам эсĕ?

***О*кеанпа танлаштарăттăм сана.**
***Л*айнер эсĕ - малаллах талпăнаттăн.**
***Е* тата туйăнаттăнччĕ мана**
***Г*ерой пек. Йăх-яха аркататтăн.**

***Т*инĕс эсĕ. Халь илетĕп астуса:**
***У*тăм хыççăн утăм хытараттăн.**
***Р*айонтан сана тăратчĕç сăнаса,**
***Х*ăв камне ĕçӳпе кăтартаттăн.**
***А*кă ĕнтĕ пурăнăпăр ĕмĕр астуса.**
***Н*икама, Олег Турхан, усал тумарăн...**

Инçет

Инçери инçе...
Вĕçсĕрлĕх, тĕнче...
Унта сан чуну
Усалпа кĕрешет.

Сан чунна
Усал чура тăвасшăн.
Канлĕх çухатса
Тамăка ярасшăн.

Сан чунна
Хам хӳттĕме илсе,
Усала пурĕпĕр памастăп,
Чунна усала суттармастăп.

Сан чунна
Ачашлăхпа, юратупа витсе,
Çăтмах алăкĕ умне
Илсе çитерĕп.

Инçери инçе...
Вĕçсĕрлĕх, тĕнче...
Унта сан чуну
Канлĕхпе лăпланать.

Салам!

Салам, савни! Каллех эп çитрĕм,
Улшăну тавраш шыратăп куçăмпа.
Эс кĕтменччĕ, тен? Эп килтĕм
Пурпĕр. Мĕн тăвас тен çамрăк чунăмпа.

Салам, савни! Мана ан хăвала эс!
Пĕрле пулма памарĕ çутă кун.
Ăнлантăм та - манах кĕтен эс,
Сан хыççăн пĕлĕте васкарĕ чун.

Леш тĕнчене часах ак пырăп.
Кĕтсе илме, юратăвăм, тухсам!
Чунсен ĕмĕрĕнче санпах эп пулăп.
Салам, савни! Çулна халь кăтартсам.

Усал мар эсĕ

Эп пĕлетĕп: усал мар эсĕ, Вилĕм.
Шелле те, йышăнсам ытамна.
Çиллентермĕп сана эпĕ ӳлĕм,
Пулăшсам, ан хытар кăмăлна.

Эп пĕлетĕп: усал мар эсĕ, Вилĕм.
Кăтартсам никам çĕнейми хăватна.
Сан пурах нушана куран сисĕм,
Пулăшсам, хĕрхенсем тăванна.

Эп пĕлетĕп: усал мар эсĕ, Вилĕм.
Пĕлтерсем, палăртсам вăхăтна.
Савнă çынсăр пушах юлчĕ килĕм,
Ан кĕттер! Кăтартсам хăватна.

Шыраççĕ санах

Пуçа çĕклеме те хăратăп. -
Куçсем шырама тытăнаççĕ сана.
Çулпа тĕлĕкри пек утатăп. -
Курмаççĕ куçсем çут куна.

Курмаççĕ куçсем çут куна.
Куççуль витĕр таврана тинкеретĕп.
Асилӳ кăшлать, касать халь чуна,
Çук унсăр çут кун - чунпа хуçăлатăп.

Пуçа çĕклеме те хăратăп. -
Ыратусăр пăхма çук эс утнă çула.
Шухăшăмра çав-çавах йĕрлетĕп
Иккĕн аташнă телейлĕ куна...

Мĕншĕн шеллемерĕн?

Мĕншĕн шеллемерĕн эс мана, Турăçăм,
Çур чĕресĕр те пулать пурăнма терĕн-им?
Мĕншĕн итлемерĕн эс мана, Турăçăм?
Е чунне уçса тилмĕрмерĕ терĕн-им?

Эй, Турă амăшĕ Мария! Пурнăçĕ
Асап-нушасăр-ха ку çылăх чунăн терĕн-им?
Кунсем пĕр шелсĕррĕн вĕçсе иртӳçĕн
Çитет телей авăрĕнче ишмешкĕн терĕн-им?

Ăнланмарăр пире, çӳлти хăватсем!
Çитет иккĕшне юрату юрри янратса терĕр-им?
Çухалтăр пире сыхлакан ангелсем,
Эсир те телей ытлашши терĕр-им?

Мĕншĕн йышăнмастăн эс мана, Турăçăм?
Нушалантăр-ха пĕчченлĕхре терĕн-им?
Мĕншĕн илсе кайрăн эс ăна, Турăçăм?
Эс çылăхлă, эс пирĕн мар терĕн-им?

Çӳлти патшалăхра

Çӳлти патшалăхра кăна лăпланĕç
Тĕрĕслĕхпе тасалăхшăн çунакансем.
Çӳлти патшалăхра кăна сипленĕç
Ултав-суя танатинче аманнисем.

Çӳлти патшалăхра кăна тăранĕç
Ку çĕр çинче юр-вар курманнисем.
Çӳлти патшалăхра кăна çӳçенмĕç
Усал-хаяр мĕнне пĕлекенсем.

Çӳлти патшалăхра хавассăн кулĕç
Кунта вĕри куççуль юхтарнисем.
Чунĕсене тасамартан тасатĕç
Пĕлмесĕр е пĕлсе тăрсах çылăхлисем.

Эх, айвансем! Çӳлти патшалăха шанатпăр
Пĕлмесĕр хамăра мĕн кĕтнине.
Çĕр йăтайми çылăхсене пăхмастпăр, -
Пĕлместпĕр упрама мĕн пуррине.

Куçусене

Куçусенче сан - тунсăх, ырату.
Куçусенче сан - авăр, пăлхану.
Пăхсамччĕ эсĕ ман çине,
Ан тарт ачаш куçусене,
Ăнлантăм тин сана юратнине.

Куçусенче пур шиклĕх те выляв,
Кун пек чухне инçех те мар ултав.
Куçусенчен кайма пĕлмест шырав,
Мана валли тек çук унта утрав.

Пĕлетĕп, пулмĕ маншăн каçару.
Мĕнех тăвар: ку - пирĕн çухату.
Çемьеллĕ пул, юрат ачусене,
Вăлтса куç ывăт мăшăру çине,
Анчах ан ман тепри юратнине...

Мĕншĕн?

Мĕншĕн йывăр чунра?
Мĕншĕн сассăр йĕрет чун-чĕре?
Мĕншĕн савăнăç çук çут кунра?
Çав-çавах савăнатпăр сĕре.

Мĕншĕн йывăр чунра?
Çĕкленес çӳллĕрех те пĕрре
Ман курасчĕ тасалăх çынра,
Ун чухне, тен, лăпланĕ чĕре.

Мĕншĕн йывăр чунра?
Мĕншĕнне ăнланатăп тăнпа,
Сăлтавне эп шыратăп хамра,
Кăмăла улăштармăн тумпа.

Йывăр, йывăр чунра...
Пурпĕрех пурăнап кулăпа,
Курăнать, тен, асаплăх сăнра,
Пурпĕрех кĕрешеп усалпа.

Шурлăх

Тĕлĕнеп хушăран:
Чунĕпе таса мар вăл,
Çынпа çынла мар вăл, -
Пурпĕрех лайăх тет.

Тĕлĕнеп хушăран:
Тусĕнчен кулать хăй,
Теприне çиет хăй, -
Пурпĕрех ыр çын тет.

Тĕлĕнеп хушăран:
Мухтанса çеç çӳрет,
Чунĕпе нишленет, -
Пурпĕрех пурнап тет.

Тĕлĕнеп хушăран:
Хамран хам тĕлĕнеп,
Мĕншĕн пит айван эп,
Шурлăхра мĕн кĕтеп?

Тĕлĕнме пăрахрăм:
Шурлăхра путмастăп,
Шурлăхрах ишетĕп,
Шурлăхрах тасалăп.

Саншăнах

Çĕр çине килет çĕнĕ чун,
Кăмăлтан эс ăна ырă сун.
Эп пĕлеп, эсĕ ман çутă кун,
Саншăнах юрлать манăн чун.

Хушса юрламалли:
Çут хĕвел, çут хĕвел, çут хĕвел
Ялкăшать кунсерен.
Сар шевли, сар шевли, сар шевли
Сан çинче.
Саншăнах, саншăнах, саншăнах
Куç уçап ирсерен.
Саншăнах, саншăнах, саншăнах
Кăлтлатать ман чĕре.

Эпĕ хатĕр кĕмешкĕн вута,
Эп сикĕп пĕр шиксĕр шыва.
Ман чĕре - сан чĕрӳн çурри,
Пĕр саншăн вăл тапать чарăнми.

Пĕр саншăн çеç эп Арăслан,
Пулччĕ эсĕ ман Акăшпи.
Кирлĕ мар ырату та суран,
Ачашлам-и сана кăмăлтан?

Халĕ, ак, ӳсеç ачасем,
Юратаççĕ ашшĕпе амăшне.
Ах, мĕн-ма çунтараç туйăмсем?
Сан питне ачашлам ирсерен.

Ан мансам

Куçусенче сан - тунсăх, ырату.
Куçусенче сан - авăр, пăлхану.
Пăхсамччĕ эсĕ ман çине,
Ан тарт ачаш куçусене,
Ăнлантăм тин сана юратнине.

Куçусенче пур шиклĕх те выляв,
Кун пек чухне инçех те мар ултав.
Куçусенчен кайма пĕлмест шырав,
Мана валли тек çук унта утрав. -
Манас-шим ĕнтĕ халĕ иртнине?

Пĕлетĕп: пулмĕ маншăн каçару.
Мĕнех тăвар - ку пирĕн çухату.
Çемьеллă пул, юрат ачусене,
Вăлтса куç ывăт мăшăру çине,-
Анчах ан ман тепри юратнине.

Чунçунтармăш

Юратура пулман нихçан хăюллă,
Куç хыврăм ăнсăртран эп кӳршĕ каччине.
Ай-уй, ытла та вăл илемлĕ -
Пĕлместĕп мĕн тумаллине.
Шухăшăмпа таçта вĕçетĕп,
Куратăп мĕн тумаллине.
Ĕмĕтĕмре сана калатăп
Пĕр эсĕ, эсĕ кирлине.

Хушса юрламалли:
Эс пĕр маншăн çуралнă.
Чунра кичем - санах кĕтетĕп.
Чĕрем тапать аса илсен,
Ăçта çӳрен-ши, чунçунтармăш?

Сан куçусем çиçеç, çиçеç ыйтуллăн,
Мĕнле хурав парам-ши вĕсене?
Тен, эс пĕлен, мĕн-ма сăпайлă
Çуратнă-ши чăваш хĕрне?
Эх! Пĕр хĕрелетĕп, шуралатăп
Куç ывăтсассăн ман енне.
Пуçа чиксе таçта таратăп -
Пĕлсе тăрса хам айванне.

Юратура кирлех, кирлех хăюлăх.
Асту, çухатăн кӳршĕ каччине.
Саван пулсан, сыв пул, сăпайлăх,
Ан вĕçертсем хăв телейне.
Чăнах: мĕнле арçын, мĕнле мăнаçлăх,
Телей кӳрет-ши кам хĕрне?
Тен, пĕлтерес, - тарам сăпайлăх,
Мана пĕр эсĕ кирлине...

Çĕнĕ çул

Сисĕнмесĕр иртрĕ кивĕ çул,
Çитрĕ-тăчĕ, кĕттермерĕ çĕнĕ çул.
Ан васка кайма, манпах эс пул,
Кăмăлтан-чунтан ахăлтатса кул.

Хушса юрламалли:
Хĕл Мучи! Юр пике! Ан кĕттерĕр!
Пĕтĕм халăх кĕтет кăмăлтан.
Хĕл Мучи саламне çитерсемĕр,
Савăнма тытăнар çавăнтан.
Хĕл Мучи-и-и! Юр пике-е-е! Ау-у-у!

Ан кулян, килет тепĕр çул.
Кив асап-нушана - алă сул!
Вăл та ку çитмест? Пурпĕр кул!
Хĕл Мучи парнелет çĕнĕ пил.

Пĕрле чух çĕнтереймĕ сивĕ çил.
Манăн тус пуласшăн? Эппин кил!
Тус-тăванпа ĕмĕр пĕрле пул,
Куççуль ан кăтарттăр çĕнĕ çул!

Иртĕ сисĕнми, ак, тепĕр çĕнĕ çул.
Иртнине пăхмасăр чунпа çамрăк юл.
Пĕтĕм тĕнчене эс ырă сун,
Çавăн чух савăнтарĕ çутă кун.

Пуçла чупма

Илемлĕ пӳ-сие кам юратмасть?
Чирлемесессĕн кам-ши савăнмасть?
Кур халĕ - еплерех ун шăнăрсем!
Вĕлт! Вĕлт! выляç кире пуканĕсем.

Хушса юрламалли:
Пăрах туртма! Пуçла чупма!
Ту физзарядка ирсерен!
Пăрах эс ассăн сывлама!
Ахăлтатса кул чĕререн!

Пирус туртсан ӳпке те сывламасть.
Сассу та уççăн-уççăн янрамасть.
Чĕре ялан чикет, пуç ĕçлемест...
Тепри вара пĕрре те чирлемест!

Эрех-сăра нихçан та ыр тумасть.
Нихăçан та ыр пурнăç кăтартмасть.
Ĕмĕрĕпе пулсан алра тулли черкке -
Алла лекмест çав ĕнтĕ чиперкке.

Юрату тата курайманлăх

Юрату тата курайманлăх,
Юрату тата кĕвĕçӳ...
Пĕр-пĕринсĕр пулмасть ниепле те,
Пĕр-пĕринсĕр пулмасть ырату.
Пĕр-пĕринсĕр тухмасть хĕвел те,
Пĕр-пĕринсĕр пулмасть çухату.

Юрату тата курайманлăх,
Юрату тата кĕвĕçӳ...
Юнашар вĕсем паян та,
Юнашар çуралать çухату.
Юнашар, кирлĕ мар пулсан та,
Юнашар чунсенче пăлхану.

Юрату тата курайманлăх,
Юрату тата кĕвĕçӳ...
Кирлĕ мар, çунатăп пулин те,
Кирлĕ мар чуна кăшлакан юрату.
Кирлĕ мар, кĕлленетĕп пулин те,
Кирлĕ мар йĕртекен кӳлешӳ.

Юрату тата курайманлăх,
Юрату тата кĕвĕçӳ...
Кĕтетĕп, чунра пушă пулин те,
Кĕтетĕп, ыраттарĕ, тен, сăмаху.
Кĕтетĕп, шанчăк çук пулин те,
Эп кĕтетĕп: килетех ырату.

Ан выля

Ан выля манпа ача вăййи, ан выля,
Пурнăç мĕнлине пĕлетĕп эп, чухлатăп.
Ан кала мана суя сăмах тек, ан кала,
Инкеке сирме вăй-хал эп пурпĕр çитеретĕп.

Ан выля манпа ача вăййи, ан выля,
Çын сăмах-юмахне пурпĕр çĕнтеретĕп.
Ан васкат çут тĕнчерен кайма, ан васкат,
Сан патна эп каярах та пурĕпĕр килетĕп.

Ан выля манпа ача вăййи, ан выля,
Чун-чĕре унсăрăнах шăнса пăрланнă.
Ан тивсем, иртни тек таврăнмĕ каялла,
Мĕнрен мĕн килессине эпир ăнланнă.

Ан выля манпа ача вăййи, ан выля,
Пурнăç унсăрăнах синкерпеле хупланнă.
Ан кала мана суя сăмах тек, ан кала,
Инкеке сирме вăй-хал ялан çитернĕ.

Ăнланманлăх

Эп сана кураймастăп,
Эс мана юратмастăн.
Чĕресем пĕр-пĕриншĕн - çич ют.
Эп санпа канашласшăн,
Эс вара тăн парасшăн.
Тен, пулар пĕр-пĕриншĕн
Хĕмленсе тăран вут?

Эп сана ăнланмастăп,
Эс мана тăнламастăн.
Хуйхăрма халь иртнишĕн çук шут.
Эп сана кураймастăп,
Эс мана чăтаймастăн.
Пулар пĕр-пĕриншĕн
Ĕмĕрех çичĕ ют.

Эп паян хурланмастăп.
Сан патна ăнтăлмастăп.
Чĕрере халĕ ман - урăх сăн.
Эп ăнах кăмăллатăп.
Эп ăнах тус тăватăп.
Кураймастăн пулсан -
Ырă сун.

Эп чăнах хурланмастăп.
Çав куна асилместĕп.
Ĕмĕтре ман халь - урăххи.
Эп чăнах кулянмастăп,
Иртнине асилместĕп.
Пурнăçра ман халь - урăххи.

Ӗмӗрсем урлӑ

Ӗмӗрсем урлӑ сана сӑнарӑм.
Сан сӑнна кашни çынра шырарӑм.
Сан сасна ӗмӗрсем урлӑ илтрӗм.
Сан чунна пыл хурчӗ пек пуçтартӑм.

Ӗмӗрсен кӗрлевӗнче чуну мана шырарӗ.
Ман чунпа пулас тесе ниме пӑхмарӗ.
Юратма пӗлейменни - сӗрлерӗ...
Ӗмӗрсен сасси çакна илтмерӗ.

Ӗмӗр урлӑ сан çине тинкертӗм.
“Эсӗ мар-ши Тур çырни?” тесе пуç ватрӑм.
Ӗмӗрсен çил-тӑвӑлне сирсе хӑвартӑм.
Чунӑма чӑн-чӑн юратупа çунтартӑм.

Ӗмӗрсен хистевӗ иккӗне те шеллемерӗ.
Ӗмӗрсен ӑслайӗ никама та пулӑшмарӗ.
Ӗмӗрсен усалӗ туйӑма чӑл-пар аркатрӗ,
Никама та çут хӗвел кӑтартмарӗ.

Ӗмӗрсем урлӑ каллех сана шыратӑп.
Сан чунна куç хупмасӑр кӗтетӗп.
Ӗмӗрсем урлӑ куççуль йыхравӗ яратӑп.
Пӗлетӗп. Сан чунна пурпӗрех тӗл пулатӑп...

Савса çĕклерĕн

Эс мана паян телейлĕ турăн,
Çӳллĕ-çӳллĕ тӳпене савса çĕклерĕн.
Киленӳ шерпечĕпе чунтан сăйларăн,
Юрату авăрĕнче ишме вĕрентрĕн.

Эс мана паян телейлĕ турăн,
Чунăмри пăра ачашлăхпа çĕнтертĕн.
Эп хальччен курманнине кăтартрăн,
Тыткăнри хĕлĕхсене вĕçертрĕн.

Эс мана паян телейлĕ турăн,
Ик çунатăма ирĕк, кал-кал вĕçтертĕн.
Вăй парса мана эс юратуллăн
Чĕремри вут-кăвара вутпах сӳнтертĕн.

Эс мана паян телейлĕ турăн!..

Ан йӗрсем

Ан йӗрсем, аннеҫӗм, ан йӗрсем.
Ҫук телей, мӗн тӑвӑн, хӗрӳсен.
Пытармастӑп инкеке, эс пӗлсем,
Кӗске пулчӗ пурнӑҫ ҫулӗ кӗрӳсен.

Ӗмӗтленнӗ те телей ҫинчен вӗсем,
Ҫут малашлӑх пулнӑ ачисен.
Ҫурт ҫавӑрнӑ ҫамрӑк ҫемьесем,
Май килмен телейлӗ пурӑнма хӑйсен.

Телее аркатнӑ ҫав усал чунсем,
Ҫын кунҫулне татнӑ пилсӗрсем.
Хӗвел мар умра - хура кунсем,
Хура тутӑр пуҫсенче те мӑшӑрсен.

Хурлӑхлӑн тинкереҫҫӗ ачисем,
Шывланаҫҫӗ вӗҫӗм куҫӗсем вӗсен.
Шел, аманаҫҫӗ ҫамрӑк чунӗсем,
Лӑпланайӗҫ-ши ҫулсем иртсен?

Ан йӗрсем, аннеҫӗм, ан йӗрсем.
Мӗн тӑвас тен, телей ҫук хӗрӳсен.
Лӑплансам, аннеҫӗм, ан кӗтсем,
Кӗске пулчӗ пурнӑҫ ҫулӗ кӗрӳсен.

Эс – вĕсен ратти

Амăш пулнă ачисемшĕн шурă Акăш,
Ашшĕ пулнă тĕрĕслĕхшĕн çуннă Арăслан.
Халиччен те упранать çак çутă варкăш,
Тĕрĕслĕх пулсан, тăванăм, çăмăлрах сывлан.

Çулĕсем вĕсем чупаççĕ: çирĕм, вăтăр, хĕрĕх...
Малаллах каясшăн пурнăç кустăрми.
Чĕрере янрать халь чарăнми пĕр хĕлĕх:
“Усал ан ту, ывлăм, эс - Турхан ратти”.

Атте-анне пилĕ пулăшса пыринччĕ.
Çук-çке унсăр канлĕх санăн чунунта.
Вĕсемпе пĕрле эс те Арăсланччĕ,
Шурă Акăш сăнĕ халь те умăнта...

Эсĕ тата эпĕ

Эсĕ - кайкăр, эпĕ - чун-чĕре хăвачĕ.
Эсĕ - çав хăватăн тыткăчи.
Эс мана çунат хушма сĕнетĕн,
Эп вара хăратăп: пулĕ-шим усси?

Эп сана пĕрре курсах юратрăм,
Аташу-ши çакă? Е, тен, юрату?
Эп санпа çӳле-çӳле хăпартăм,
Чĕрене кăшламĕ-ши йӳçĕ ӳкĕнӳ?

Хальлĕхе эп - санăн, эсĕ - манăн,
Чĕрере - ачашлăх, ырлăх, киленӳ.
Çак асамлăха епле-ха манăн,
Çакă-шим вăл тарăн, тĕпсĕр юрату?

Чăваш Юпи

Кунта эпир пĕрне-пĕри юратнă.
Пире сыхланă чăн Чăваш Юпи.
Унран эпир яланлăха пил ыйтнă,
Тинех яр! уçăлчĕ кăвак хуппи.

Кунта эпир пĕрне-пĕри юратнă.
Пире пил панă ырă кун çути.
Хĕрӳ туртăнăва хамăр сăнанă.
Тавралăха янратнă юрату кулли.

Кунта эпир пĕрне-пĕри юратнă,
Кĕрхи илем, çанталăк куç тулли.
Иксĕмĕре кăна савса çутатнă
Сăпайлă уйăх - ăшăтнă кулли.

Кунта эпир пĕрне-пĕри юратнă.
Вăтанасси пулман-тăр. Çитнĕ куç хупни.
Сăмахсăрах чун юррине янратнă,
Пире чăрмантарман ют куç пурри.

Кунта эпир пĕрне-пĕри юратнă.
Янранă хыттăн ик чĕре таппи.
Юратăва сыхланăн туйăнатчĕ
Мăнаçлă палăк - чăн Чăваш Юпи.

Çемьеллĕ эсĕ

Çемьеллĕ эсĕ. Эпĕ те çемьеллĕ...
Чĕре вара пăхмасть ăна-кăна.
Санпа кăна туяп хама телейлĕ,
Манаймăп ĕнтĕ ĕмĕрне сана.

Çемьеллĕ эсĕ. Эпĕ те çемьеллĕ...
Чĕремĕрсем пулайĕç-ши пĕрле?
Сăмахусем питех те сан шеллевлĕ,
Шăпăртатса куççуль юхать çĕрле.

Çемьеллĕ эсĕ. Эпĕ те çемьеллĕ...
Мĕнех-ши пирĕншĕн çын сăмаххи?
Пуласлăх пирĕн пурĕпĕр тĕтреллĕ,
Тытса чараймĕ пулĕ япăххи.

Çемьеллĕ эсĕ. Эпĕ те çемьеллĕ...
Пурах-ши пирĕн çутă ăраскал?
Шухăшăмсем пуласлăхсăр, - вĕçевлĕ.
Йӳçĕ куççульлĕ хăшĕн ăраскал.

Çемьеллĕ эсĕ. Эпĕ те çемьеллĕ...

Сан яту

Яту кăна юлчĕ асра...
Ыттине пĕтĕмпех эпĕ маннă.
Пуш-пушах халь манăн чунра,
Сăнару тĕтре евĕр çухалнă.

Яту кăна юлчĕ асра...
Телее упраман, вăл арканнă.
Урăххи халь манăн çумра,
Иртнисем тĕтре евĕр саланнă.

Яту кăна юлчĕ асра...
Шел. Пĕрле пуласса эпир шаннă.
Курмастăп хĕвеллĕ кунра
Сăнарна. Хурапа вăл хупланнă.

Яту кăна юлчĕ асра...

Мĕн кĕтетĕн, тăванăм?

Мĕн туса пурăнатăн, тăван?
Мĕн çинчен çаплах шухăшлатăн?
Тем кĕтетĕн пулас...

Икĕ йăлтăр куçу
Ак кĕçех куççульпе шывланать -
Мĕн-ма хурланатăн, тăванăм?

Эпĕ асна килсен ăнсăртран
Кулса ил, кала ăшшăн-ăшшăн:
- Юрататăп пулас...

Икĕ йăлтăр куçу
Тем кĕтсе инçене тинкерет.
Мĕн ку, юрату-ши, тăванăм?

Манăçмаççĕ

Пĕлеймерĕм ятна,
Астумастăп сăнна -
Куçусем çав-çавах манăçмаççĕ.
Вĕсенче - ырату,
Пăлхану, уйрăлу...
Тем çинчен-çке вĕсем шухăшлаççĕ.

Икĕ йăлтăр куçу
Куççульпе хуплансан,
Чăтаймарăм, çумна пырса тăтăм.
Шел, ыйтмарăм ятна,
Паллашмарăм санпа,
Ырату мансăрах иртĕ терĕм.

Ман куçри тунсăха,
Чĕрери пăлхава
Сисрĕн эсĕ, ăнлантăн.
Куççульне типĕтсе,
Айăпланнăн пăхса,
Йăл-л! кăна кулса илтĕн.

Пĕлеймерĕм ятна,
Астумастăп сăнна,
Куçусем çав-çавах манăçмаççĕ...

Ан мансам

Яту çеç юлчĕ асра,
Ытти çухалчĕ самантра.
Пуш-пушă халĕ чунра,
Кунсем иртеççĕ шухăшра.

- Ан ман, ан ман ачаш сăмахсене...
- Епле манас? Пурнатăп вĕсемпе...
- Ан ман, ан ман чĕремĕр таппине...
- Анчах епле чăтас ыратнине?

Яту çеç юлчĕ асра,
Асамлăх çук тек куçунта.
Лексессĕн тĕпсĕр авăра,
Пулас килет ытамунта.

- Ан ман, ан ман кăвак хуппи çинчен...
- Епле манас? Эп халь те тӳпере...
- Ан ман, ан ман хăват пурри çинчен...
- Çавна туйса вĕçетĕп тĕлĕкре...

Яту çеç юлчĕ асра,
Чун пăрланать сив ылханра.
Курмас малашлăх умра,
Манасчĕ манăн иртнине.

- Ан ман, ан ман ачаш сăмахсене...
- Епле манас. Пурнатăп вĕсемпе...
- Ан ман, ан ман чĕремĕр таппине...
- Анчах епле чăтас ыратнине?

- Ан ман, ан ман кăвак хуппи çинчен...
- Епле манас? Эп халь те тӳпере...
- Ан ман, ан ман хăват пурри çинчен...
- Çавна туйса вĕçетĕп тĕлĕкре...

Кĕтсе илмерĕн...

Кĕтсе илеп, тесе ăсатрăн,
Тулли куççульччĕ куçунта.
Пĕлсе тăрса мĕн-ма шантартăн,
Тепри пулсассăн çумăнта?

Салтак пăтти ахаль нушаллă,
Эс манмăн теттĕм чунăмра.
Çилленмĕн-ши, текен ыйтуллă
Çыру выртать халь умăмра.

Мĕнех, сана унти чуптутăр,
Эп ыталатăп теприне.
Салтак чунне ултав çунтартăр,
Эп таврăнатăп кĕркунне.

Анчах ун чух манпа эс пулмăн,
Ман чĕрере халь - урăххи.
Кĕтесшĕн мар пулса ал султăн,
Ик çул иртет - чи лайăххи!

Кăмăл тулчĕ, чун лăпланчĕ...

Халăхпа пулма шут тытрăм, килсе çитрĕм васкаса,
Тус-тăванăм хапăл пулчĕ, кĕтсе илчĕ йăл! кулса.
Кăмăл тулчĕ, чун лăпланчĕ, юр юрлатăп савăнса.
Пурăнар-и юратуллă, пĕр-пĕрне чунтан савса?

Каччисем маттур та ăслă, хушăран пулаç кăра.
Пурнăçа тăвасшăн тулăх, черкке çук вĕсен асра.
Кăмăл тулчĕ, чун лăпланчĕ, юр юрлатăп савăнса.
Пурăнар-и юратуллă, пĕр-пĕрне чунтан савса?

Пăрчăкан пек чăваш хĕрĕ, ал-ури ĕçчен, вăр-вар.
Калаçать вăл çыпăçуллă, алли асамлать юр-вар.
Кăмăл тулчĕ, чун лăпланчĕ, юр юрлатăп савăнса.
Пурăнар-и юратуллă, пĕр-пĕрне чунтан савса?

Тăван халăх, пуç таятăп, ыр сунатăп ĕмĕре.
Ят-сум пултăр, йышу ӳстĕр, ял-йыш пытăр килĕре.
Кăмăл тулчĕ, чун лăпланчĕ, юр юрлатăп савăнса.
Пурăнар-и юратуллă, пĕр-пĕрне чунтан савса?

Йӳçӗ! Пӗрре, иккӗ, виççӗ...

Пит васкавлӑ мӗн пурнӑç утти, -
Тӑрӑшсах тем шыран иртнинче.
Çук ачалӑх, хыçра халь ытти,
Шав çӳрен асилӳ тӗнчинче.

Хушса юрламалли:
«Йӳçӗ! Йӳçӗ!» - тархаслать кӗреке.
Шӳт те савнӑç тӑван ыйтнинче.
«Йӳçӗ! Йӳçӗ!» - янратать кӗреке,
Ах, ытла та хавас чунсенче.
Йӳçӗ-ӗ-ӗ! Пӗрре, иккӗ, виççӗ,
Именсе чуптӑваç çӗн çынсем.
Йӳçӗ-ӗ-ӗ! Вуннӑ, вунпӗр, вуниккӗ,
«Пылакланчӗ тинех», - теç туссем.

Йӑлтӑр-ялтӑр фата, шур кӗпе,
Йӑлтӑр кулӑ çиçет питсенче.
Сар хӗвел ыталать шевлипе,
Ют ан тӑтӑр ик чун хушшинче.

Тав тӑватпӑр атте-аннене,
Пирӗн пурнӑç тӗшши вӗсенче.
Икӗ чун пӗрлешет çемьене,
Çавӑрать пӗр йӑва хальхинче.

Йышӑнсамӑр тӑван саламне -
Тулли пурнӑç вӑл - ачасенче.
Шута илӗр ваттин пехилне -
Çилӗ ан тытӑр чунӑрсенче.

Ăнлан

Каллех кая юлса эп çитрĕм сан патна...
Каçар, анчах сăлтавĕ те пит пысăк.
Ĕнен, туман ятарласа нихçан çакна,
Шăпа тени ытла та пирĕн кăсăк.

Пуçра тĕллев пулсан, ĕç-пуç çинчен манса,
Тĕлпулăва çунат пур пек васкатăп.
Анчах мĕн тăвăн? – Çул çинче мана тытса
Чаракантан епле-ха иртсе кайăп?

Çула тухсан, хăйса чĕнсе илекене,
Е урамра кĕтмен çынна курсассăн,
Васкан пулсассăн та, ун чун ыратăвне,
Хăвăнни пек куран, этем пулсассăн.

Кала, епле кая юлмасăр эпĕ çитĕп,
Çын нушинчен тарма пĕлмес пулсан?
Çитсен те сан пата, асапланса эп çунăп, –
Епле-ха савăнăп чуна асап пуссан?

Теприн ыратăвĕ? Çапла, ман мар. Анчах
Сисмесĕрех вăл ман пулса тăрать.
Унтан май çук пулсассăн пулăшма пачах
Чуна айăпсăрах айăпласа кăшлать...

Мĕншĕн?

Çамрăк ĕмĕр иртрĕ, юлтăм хурланса,
Çирĕпленсе çитрĕм, утрăм йăл! кулса.
Туссенчен пуян эп, çакă суя мар,
Пурнăçра хăр-тăлăх юлма кирлĕ мар.

Хушса юрламалли:
Калăр, мĕншĕн çамрăк ĕмĕр,
Çамрăк ĕмĕр каялла тек таврăнмасть?
Мĕншĕн çын, çут çăлтăр евĕр,
Йăлкăшса çутатаймасть?

Халăхпа эп пултăм, юлтăм халăхпа,
Тус-тăвана саврăм, саврăм хваспа.
Чун хавалĕ пур-ха, кулянмалла мар,
Пурнăç вăл хăналăх, савăнса юлар.

SMS çырма тек кирлĕ мар

SMS çырма тек кирлĕ мар,
Вĕсене, ĕнен, эп пурпĕр вуламастăп. -
Кăнтăртан килен хуркайăк карти евĕр,
Чарăнми вĕçеççĕ ыратуллă йĕркесем...

SMS çырма тек кирлĕ мар,
Перекетле хăв вăхăтна, урăххинне те.
Мĕнех, мĕн пулнине, çыхăнăва манар,
Асамлăх тĕнчине ман чун тек таврăнаймĕ...

SMS çырма тек кирлĕ мар,
Ан ыраттар чунна - пăрах телефонна та,
Пăхсам йĕри-тавра, шыра урăх сăнар,
Пулать, пулать манма мана. Юратăва та...

SMS çырма тек кирлĕ мар,
Сăмахусем чуна-çке пĕртте ăшăтмаççĕ.
Ан чар хăвна - çӳл тӳпене вĕçсе хăпар,
Тен, санпа унта тепри телейлĕн кулĕ...

SMS çырма тек кирлĕ мар,
Ăнлан, пурнăç тени вăл ыратусăр килмĕ.
Вăй çитерсе, чунри кӳренĕве манар,
Тепре чĕрĕлнипе танах, тен, çакă пулĕ...

SMS çырма тек кирлĕ мар...

Эфирта - Наци радио сасси

«Наци радиовĕ» тетпĕр кăмăлтан.
Янăраççĕ юрăсем те хыпарсем.
«Вăрçă ахрăмĕ», «Асамлăх çĕрĕ-шывĕ»,
«Чăвашсен йăли-йĕрки»... - чылай кăларăмсем.

Хушса юрламалли:
Ырă кун сунатпăр, Чăваш Енĕм!
Кунăр савăк пултăр, ентешсем!
Эфирта - Наци радиовĕн туслă йышĕ,
Сирĕнпе пĕрле сĕм çĕрлеччен.

«Çĕнĕ кĕнеке», «Ялтан яла» е «Авăтсан автан»,
Ачасемшĕн пит паха «Мумук халапĕсем».
«Чĕрĕлĕх çути» - вăл хăй те «Пархатар»,
«Каçхи микс» та - чун-чĕре саламĕсем.

Чăвашла та, вырăсла та калаçать наци хумĕ,
«Тĕнче курăм», «Тăван ен сăнарĕсем»...
Пĕрле чух ӳсет халăх чапĕ-сумĕ, -
Эфирта - «Чĕререн тухакан сăмахсем».

Чăвашра та, Тутарта та, Мускавра та,
Янăрать мăнаçлăн Наци радио сасси.
Чĕмпĕрсем те, самарсем те... - пурте, пурте
Итлĕр радио. Ку вăл - Чăваш сасси!

Эсĕ кĕт...

- Таврăнсамччĕ, тархаслатăп...
- Таврăнатăпах...
- Ан мансамччĕ, тархаслатăп...
- Çук, манмастăпах...
- Ан çухал, тащти çĕрте пулсан та...
- Çухалмастăпах...
- Хуçăлса ан ӳк, инкек тавраш пулсан та...
- Хуçăлмастăп. Таврăнатăпах. Эс кĕт.

- Ан итле çын сăмахне, тархаслатăп...
- Итлесен вара?..
- Çын телейлине курсан - кĕвĕçеççĕ...
- Кĕвĕçсессĕн те?..
- Куçусем мана кăна куринччĕç...
- Эсĕ çеç умра...
- Ан çухал... Мана эс питĕ кирлĕ...
- Çухалмастăп. Таврăнатăпах. Эс кĕт.

- Юрату тыткăнĕнче эп, тусăм...
- Эпĕ те çавах...
- Кăларса чĕререн ывăтсассăн?..
- Кирлĕ мар, лăплан...
- Чунăма çунтарать пĕр шелсĕр...
- Манăн та çавах...
- Ах, сывлассăм килет ыратусăр...
- Сывлăпăр. Таврăнатăпах. Эс кĕт.

Канашсем

/«Канашсем» ентешлĕх юрри/

Тăван çĕр техĕмне туйса ӳсрĕмĕр.
Ватăсен пехилне асра тытрăмăр.
Атте-анне сăмахне итлерĕмĕр.
Çавăнпа, Канашсем, вăйлă пултăмăр.

Хушса юрламалли:
Канашсем! Канаш ен!
Пĕрлештерчĕ ентешлĕх пире.
Канашсем! Канаш ен!
Пурăнар ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле!

Тăван çĕр çăкăрне çисе ӳсрĕмĕр.
Сив çăлкуç шывĕпе сиплентĕмĕр.
Эрех мар, пыл сăри кăна ĕçрĕмĕр.
Çавăнпа, Канашсем, çирĕп пултăмăр.

Çĕн куна кĕтсе çĕнĕлле ĕçлерĕмĕр.
Хамăр Çеçпĕле, Мишшана, манмарăмăр.
Ентешсен ятне çӳле çĕклерĕмĕр.
Çавăнпа, Канашсем, мăнаç пултăмăр.

Пĕр эс кăна...

- Паян санпа тĕл пуласса пĕлсе,
Ĕçсем çине, тĕнче çине ал султăм.
- Чылай пуç ватрăм эп те иртенпе...
- Тахçантанпах кĕтсе. Тинех тĕл пултăм...

Хушса юрламалли:
Пĕр эсĕ кăна, пĕр эсĕ кăна...
Чылай çул пĕрле, ĕмĕрех пĕрле.
Юратма вара... пĕртте çăмăл мар.
Пĕр эсĕ кăна, пĕр эсĕ кăна...
Шăплăха татса парсам аллуна.
Инкеке сирсе... юнашар утар.

- Асамлă туйăм килнине сиссе,
Кайма пĕлмерĕ пит çинчен йăл кулă.
- Эп пăшăрхантăм килĕ-ши тесе...
- Чун ыйтнине сирме пултараймарăм...

- Килсе тухсассăн пурнăç пăтăрмахĕ,
Манпа пайлайăн-ши пур инкеке?
- Пĕрле пулма, ĕнен, эп шантаратăп...
- Эппин, утар пĕрле вĕçсĕрлĕхе...

- Епле илемлĕ çут тĕнче, савниçĕм,
Епле нумай тĕллев пирĕн умра!
- Мана тек кирлĕ мар чĕре суранĕ...
- Мĕнпур усалĕ чăмтăр авăра!

Текех ыталаймастăн...

Çунатсене хуçсан - вĕçме пултараймастăн.
Тем пек вĕçме тăрсан та çӳлелле.
Алăсене хуçсан - текех ыталаймастăн.
Чун туртăнсан та унăн патнелле.

Пĕрре сана сутсан - текех ĕненейместĕн.
Каçарăн тен... Анчах пăхсассăн малалла
«Ку - юлашки», - тесе хăвна шантараймастăн.
Пĕрре сутсан иккĕленӳсĕр пулмĕ малалла.

Хурлăхан

Пуçне усрĕ хурлăн хура хурлăхан,
Çĕр йăтайми хуйхă пырса çапнăран.
Мĕн тери паха-мĕн çĕр çинчи тусан,
Çук ун хуйхă-суйхă - çилĕ лăпкăран.

Пуçне усрĕ хурлăн хура хурлăхан,
Кăмăлĕ пит ăшă, уçă пулнăран.
Сив сăмах тухаймĕ манăн ăшăмран,
Маншăн ахалех, тен, эсĕ кулянан?

Пуçне усрĕ хурлăн хура хурлăхан,
«Тĕрĕс мар тăватăн, телейрен таран.
Çăмăлттайлăх иртĕ, хуйхăрăн кайран,
Пĕчченех ак юлăн ăнлану çукран».

Пуçне усрĕ хурлăн хура хурлăхан,
Ывăннă-тăр вăл та тĕксĕм пурнăçран.
Панине пĕлмеççĕ илме кăмăлтан,
Чунри пăр катăкĕ пысăк пулнăран.

Айăпна ăнлан!

Хăвăнра айăп çук тесе эс ан шутла,
Унăн пурнăçĕ санран та килнĕ.
Унталла та кунталла ан пăхкала,
Вăл тăраймĕ тек. Ун кунĕ сӳннĕ.

Тек тăраймĕ, хăратаймĕ вăл сана.
Пулăшу ыйтсан та пулăшаймĕ.
Тек кураймĕ вăл çак çут куна,
Саламат сасси те вăратаймĕ.

Ăнланмарăн ирĕклĕ чуна,
Айăпна куççуль те каçараймĕ.
Вăл пуласшăнччĕ кăшт урăхла кăна,
Ырă шухăшне тек кăтартаймĕ.

Хăвăнра айăп çук тесе эс ан шутла,
Пулăшу ыйтнă чух - тĕксе ятăн.
Пурнăçра вара пулать çапла:
Усалли çаврăнса килет вăл кутăн.

Ним вырăнне хумастпăр тăвана.
Укçа пулсассăн - ыталатпăр шуйттана.
Çук, маншăн мар ку ахăрсамана!
Ăнлан эс! Йышăнсамччĕ айăпна!

Савăнтарам-и?

Çĕр çинчен кайса
Сана савăнтарам-и?
Куçăнтан çĕтсе
Ирĕклĕх парам-и?

Лăштăрах кайса
Хăв çине хĕрес хыв.
Ман ята манса
Вилтăпри çине сур.

Ман сасса илтсе
Текех нушаланмăн.
Ирĕке сиссе
Иртнине астумăн.

Эпĕ - тĕлсĕр тĕлĕк,
Ман ята эс ман.
Эпĕ - иртнĕ вăхăт,
Тӳрленен суран.

Кирлĕ мар мана эс,
Ыратмасть чĕре.
Типĕтрĕн кăна эс
Пирĕн иртнине.

Çĕр çинчен кайса
Сана савăнтарам-ха.
Куçăнтан çĕтсе
Ирĕклĕх парам-ха…

Чăваш пуласлăхĕ

Санра чăваш пуласлăхĕ, тăванăм,
Санра вăл хăй пуласлăхне курать.
Эппин, ĕçлер-и çанă тавăрса, çулташăм?
Çапла тума пĕтĕм чăваш ыйтать.

Ăçта паян сан хăвату, чăвашăм?
Хăçан вăл хăй çулне-йĕрне тупать?
Мĕн-ма асаплăн тинкерет çулташăм?
Куççуль авăрĕнче мĕскер-ши вăл шырать?

Ытла та тарăн пулчĕ-шим суранăм?
Аран-аран ентешĕм йăл илет.
Сан асапна, ман Атăлçи Пăлхарăм,
Нивушлĕ тепĕр хут курмах тивет?

Ăçта-ши эс, кĕрнек мăнаç Юманăм?
Санра чăваш пуласлăхне курать.
Аваллăхран пăхать Ошель, Пăлхарăм,
Чăваш тĕнчи хăй ывăлне сăнать...

Куҫсенче – кӗркунне

Куҫсенче, асӑрха, кӗркунне ман.
Чунӑмра - куҫ курми тӑман.
Чӗререх упранать сӑнару сан,
Кама-ши унта эс саван?

Куҫсенче, асӑрха, кӗркунне ман.
Мӗн ҫинчен шухӑшлатӑн, тӑван?
Вӑйсӑрлантӑн пулсан - ларса кан,
Мӗн тӑван - пирченмест суран.

Куҫсенче, асӑрха, кӗркунне ман.
Ҫут тӗнчене курайми те пулан.
Тӑрас килмен нихӑҫан ҫынпа тан,
Куллен асилӳ авӑрне халь путан.

Куҫсенче, асӑрха, кӗркунне ман.
Куҫсенче - иртми сӗлкӗш, куран.
Мӗншӗн каймасть умӑмран сӑну сан?
Мӗншӗн маншӑн тарӑн пулчӗ суран?

Куҫсенче, асӑрха, кӗркунне ман...

Мĕскĕнех-ши юлăпăр?

Мĕскĕн пулнă...
Мĕскĕнех-ши юлăпăр?
Вăйсăр юлнă...
Вăйсăрах-шим пулăпăр?
Тĕнчере ăçтиçука
Хăпартса-шим лартăпăр?

Чăваш Юман пулса кашланă, -
Сулмаклă, çирĕп вуллисем.
Ĕмĕрлĕхех тымар та янă,
Шел, çирĕп пулайман вĕсем.
Тав тумалла ăçтиçука,
Касса татать пĕтĕм йăха.

Ан васкăр пĕтерме, ан васкăр!
Эпир çавах та вăйсăр мар!
Кар! çĕкленетпĕр те, куратăр,
Чăваш вăл ятсăр çӳпĕ мар!
Шăлатпăр пур ăçтиçука,
Çут кун ан пултăр йăх-яха!

Пурĕпĕрех пурте вилетпĕр,
Чыс-сум пымасть леш тĕнчене.
Кунта укçа вăйне хаклатпăр,
Лере хаклаççĕ чыс вăйне.
Вара мĕнпур ăçтиçука
Тинех çул пулĕ тамăка.

Ăçта пулнă?

Ăçта пулнă эсĕ 10 çул каялла?
10 çул каялла кама савнă?
Мĕншĕн пăхман кăштах каялла?
Тур çырни çамрăкрах кăштах пулнă.

Ăçта пулнă эсĕ 10 çул каялла?
Кампа каçăхса кайса кулнă?
Тен, пăхса каялла, кунталла
Ăна юриех юратап тесе суйнă?

Ăçта пулнă эсĕ 10 çул каялла?
Тĕлĕкре ман пата ун чухнех эсĕ килнĕ.
Мĕн-ма килсе тухрĕ пачах урăхла?
Ĕнен, сансăр пурнăç ытла та-çке хурлă.

Ăçта пулнă эсĕ 10 çул каялла?
Кам куçĕнчи асамлăха курнă?
Камăн тути шерпетне активсе
Кунĕпе сĕрĕм тивнĕн çӳренĕ?

Çӳлти патшалăхра

Çӳлти патшалăхра кăна лăпланĕç
Тĕрĕслĕхпе тасалăхшăн çунакансем.
Çӳлти патшалăхра кăна сипленĕç
Ултав-суя танатинче аманнисем.

Çӳлти патшалăхра кăна тăранĕç
Ку çĕр çинче юр-вар курманнисем.
Çӳлти патшалăхра кăна çӳçенмĕç
Усал-хаяр мĕнне пĕлекенсем.

Çӳлти патшалăхра хавассăн кулĕç
Кунта вĕри куççуль юхтарнисем.
Чунĕсене тасамартан тасатĕç
Пĕлмесĕр е пĕлсех çылăхлисем.

Эх, айвансем! Çӳлти патшалăха шанатпăр
Пĕлмесĕр хамăра мĕн кĕтнине.
Çĕр йăтайми çылăхсене пăхмастпăр, -
Пĕлместпĕр упрама мĕн пуррине.

Эсĕ тата эпĕ

Эсĕ - кăйкăр, эпĕ - чун-чĕре хăвачĕ.
Эсĕ - çав хăватăн тыткăчи.
Эс мана çунат сарма сĕнетĕн,
Эп вара хăратăп: пулĕ-шим усси?

Эп сана пĕрре курсах юратрăм,
Аташу-ши çакă? Е, тен, юрату?
Эп санпа çӳле-çӳле хăпартăм,
Чĕрене кăшламĕ-ши йӳçĕ ӳкĕнӳ?

Хальлĕхе - эп санăн, эсĕ - манăн,
Чĕрере - ачашлăх, ырлăх, киленӳ.
Çак асамлăха епле-ха манăн?
Çакă-шим вăл тарăн, тĕпсĕр юрату?

Сан яту

Яту кăна юлчĕ асра...
Ыттине пĕтĕмпех эпĕ маннă.
Пуш-пушах халь манăн чунра,
Сăнару тĕтре евĕр çухалнă.

Яту кăна юлчĕ асра...
Телее упраман, вăл арканнă.
Урăххи халь манăн çумра,
Иртнисем тĕтре евĕр çухалнă.

Яту кăна юлчĕ асра...
Шел... Пĕрле пуласса эпир шаннă.
Курмастăп хĕвеллĕ кунра
Сăнарна - хурапа вăл хупланнă.

Яту кăна юлчĕ асра...

Ан ятлăр...

Ан вăрçăр мана, ан тиркĕр,
Епле-ха юратмăн ăна?
Ан вăрçăр ăна, ан сĕрлĕр,
Вăл мана суйларĕ кăна.

Ан вăрçăр мана, ан тиркĕр,
Усал мар эп. Ĕненместĕн? Сăна...
Пулман нихăçан та пилсĕр,
Çухатман, тытатăп тăна.

Ан вăрçăр мана, ан тиркĕр,
Юрату аташтарчĕ чуна.
Ырату-и чунра? Мĕнех, пултăр,
Пурпĕр сутмас ăна шуйттана.

Ан вăрçăр мана, ан тиркĕр,
Епле-ха юратмăн ăна?
Ан вăрçăр ăна, ан сĕрлĕр,
Вăл кăштах йăвашланчĕ кăна.

Пурӑнас тесех...

Пурӑнас тесех туртса илтӗм сана,
Çын сӑмах-юмахӗ çине алӑ султӑм.
Эп пуласшӑнччӗ кӑшт телейлӗ кӑна,
Çавӑнпах тепӗрин куççулӗнчен култӑм.

Юратас тесех туртса илтӗм сана,
Пӗтӗм тӗнче умӗнче усал пултӑм.
Эп пуласшӑнччӗ кӑшт урӑхла кӑна,
Çавӑнпах-тӑр пӗччен тӑрса юлтӑм.

Пурӑнас тесех туртса илтӗм сана,
Турра мар, юрату хӑватне мала хутӑм.
Тӑрӑшсан та манаймӑп сӑнна,
Инкек çул-йӗрне хамах эпӗ çыртӑм.

Пурӑнас тесех туртса илтӗм сана...

Чунăмрах...

Уç куллу кăлтăртатăвĕ,
Чун-чĕре ахăлтатăвĕ
Курăнать инçерех.

Çамрăк чун пăшăрханăвĕ,
Йӳç куççуль шăпăртатăвĕ
Сĕмленет çумăнтах.

Çулçăсен чăштăртатăвĕ,
Тутусен пăшăлтатăвĕ
Халиччен те асрах.

Çут куççуль йăлтăртатăвĕ,
Юханшыв шăнкăртатăвĕ
Упранать чунăмрах...

Пул эс манăн...

«Юратса курманнисем телейсĕр, -
Пăшăлтатрĕç кушăрханă тутасем.
- Эс - пĕрремĕш, сансăр эп - чĕресĕр.
Мĕншĕн шывланаççĕ чакăр куçусем?

Пул эс манăн. Пурнăç тĕттĕм сансăр.
Иккĕн чух манар ытти çинчен.
Малашне тек пурăнаймăп сансăр.
Ытамрах юлсамччĕ пурнăç вĕçĕччен...»

Тепĕр хутчен...

Тепĕр хут килес пулсан эп тĕнчене,
Улăштармăттăм нимех те хамăн пурнăçра.
Пулăттăм-и кăшт чеерех тата
Кӳрентермĕттĕм нихçан та никама.

Тепĕр хут килес пулсан эп тĕнчене,
Курман пулăттăмччĕ хурапа шурра.
Пăхăттăм пурин çине кулса тата
Юрататтăмччĕ, тен, пĕтĕм тĕнчене.

Тепĕр хут килес пулсан эп тĕнчене,
Пĕччен ӳстермĕттĕм-и, тен, Сентиере.
Парнелĕттĕм ăна Сайте, Айтар тата
Кун кунламан, тен, пулăттăм ĕçре.

Тепĕр хут килес пулсан эп тĕнчене,
Кун панă çынсене «Тайма пуçах!» - тееттĕм.
Вĕсен пилне ăшра, асра тытса вара
Тус-тăшмана, тен, уйăрма пĕлеттĕм.

Тепĕр хут килес пулсан эп тĕнчене,
Хам тăван халăхăма çаплах савса юрлаттăм.
Чăваш çыннин асаплă кун-çулне тата
Хамăн шăпана урăхларах çыраттăм...

Поэт чунĕ

Тĕрĕслĕх пуррине ĕненет поэт чунĕ,
Сăвăра та ун ырă усала çĕнтерет.
Синкерлĕ пулсан та - хĕвеллĕ кунĕ,
Сăмахĕ вара çын чунне витерет.

Чурăс çынна та поэт сывлăх сунĕ,
Хăй шухăшне халăха пĕлтерет.
Вĕчĕх чунлă тӳре çине - сурĕ,
Ăна çĕнтерме те вăй-хăват çитерет.

Чĕрене тăрăнать, амантать усал сăнă,
Поэт хăватне пĕтерме сĕкĕнет.
Кун пеккине те тӳсет поэт чунĕ,
Усала ырăпа аркатма мехел çитерет.

Пурӑнатпӑр-ха!

**Çӗр çине эпир килетпӗр
Çут хӗвел курас тесе.
Çут тӗнче хӑналӑх тетпӗр
Ыррине кӑна кӗтсе.**

Хушса юрламалли:

**Атте-анне сыв пулсан,
Тус-тантӑш çумра тӑрсан,
Упӑшка хыт юратсан,
Пурӑнатпӑр-ха, тӑван!**

**Пӗр-пӗрне час-час курмастпӑр,
Çывӑх мар-çке çулӗсем.
Тӗл пулсассӑн савӑнатпӑр,
Çӗкленеççӗ кӑмӑлсем.**

**Тепӗр чух тем ӑнланмастпӑр,
Çилленетпӗр пӗр-пӗрне,
Çук çӗртех-çке тарӑхатпӑр,
Каçармастпӑр ниепле.**

**Ӗç çине алӑ сулмастпӑр,
Хӑпартатпӑр керменсем.
Пурнӑçа ӗçре туптатпӑр,
Илӗртмеççӗ черккесем.**

**Пуласси çинчен шутлатпӑр,
Ӳстеретпӗр ачасем.
Вӗсенче малаш куратпӑр,
Ырлӑх курччӑр ватӑсем.**

**Савӑнар-ха, юр юрлар-ха,
Ӑмсанайччӑр хӑшӗсем.
Савӑнар-ха, таш ташлар-ха,
Куç илми-çке тӑвансем.**

Элекçĕ эсĕ

Элекçĕ эсĕ. Чуну таса мар сан.
Пуясчĕ тесе çеç шухăшлатăн.
Сан çине пăхас та килмест ман,
Çын телейне усалпа ăмсанатăн.

Хăçантан чапшăн çеç эс çунан.
Тепри иртсе каясран шикленетĕн.
Пуçлăхсем умĕнче икĕпитлĕ пулан,
Урăх çын тивĕçне хăвăн тăватăн.

Мĕскĕн эсĕ! Сас-чӳрен те хăран.
Тăванушăн савăнма та пĕлместĕн.
Тепĕр тесен... Кам вăл саншăн тăван?
Упа пек пĕччен пурăнма пултаратăн.

Ăнланмастăп: кам вăйне эс сăван?
Ĕçӳнте çӳллĕрен çӳле хăпаратăн.
Ыттисем çине çӳлтен халь пăхан.
Пурпĕрех тем çитмест - кӳлешетĕн.

Сăмахпа ялан малта эс пыран.
Ĕçӳ çук та - теприне хĕсме ăнтăлатăн.
Чыс-сăвап, тасалăх çук санăн,
Пурпĕрех çут тĕнче çине кӳренетĕн.

Ырӑпа Усал

Ырӑпа Усал юнашар
Утнине курнӑ-и эсӗ?
Эпӗ курнӑ. Усал Ырӑран
Иртнине те пӗлнӗ.

Усал Ырӑна пур вӑйран
Хӗснине эпӗ курнӑ.
Ырӑ вӑйран кайсан
Усалӗ ӑна пӑвма хӑйнӑ.

Ырӑпа усал юнашар...
Усал Ырӑна тӗп тӑвать...

Тăлăх чун сăмахĕ

Атте мана шур пӳрт лартса парап теетчĕ
Шап-шурă хурăн пĕренесенчен.
Манран вăл чаплă çын тума ĕмĕтленетчĕ,
Калатчĕ, тейĕн, шухăшне чун-чĕререн.

Атте мана шур пӳрт лартса парап теетчĕ.
Çухалчĕ хăй. Хăварчĕ пăрахса.
Пĕлместĕп, халь ăçта çĕтсе çӳрет-ши,
Кам ачине лăпкать-ши юратса?

Атте мана шур пӳрт лартса парап теетчĕ.
Пĕртен-пĕр ывăлне, кил тĕпкĕчне.
Эп кӳрентертĕм-шим ăна? Пĕлместĕп...
Атте, мĕн-ма амантрăн çамрăк чĕрене?

Атте мана шур пӳрт лартса парап теетчĕ...

Шутламанччĕ

**Эп сана
çапла саватăп тесе
шутламанччĕ.**

**Эп сана
ыттисем пек пулманшăн
асăрханăччĕ.**

**Эп сана
вăй-хăватна кура
хисеплеттĕмччĕ.**

**Эп сана
çынлăхшăн, сăпайлăхшăн
хаклаттăмччĕ.**

**Эп сана
хаярлăхна кура та
кăмăллаттăмччĕ.**

**Эс мана:
«Акăшпи эс манăн», -
теттĕнччĕ.**

**Маншăн çакă та,
ĕнен, мăй таранах
çителĕклĕччĕ.**

Мĕн черечĕ?

Мĕн черечĕ тетĕп ман умра.
Хура халăх мĕн ыйтать тесе пуçа вататăп.
Лăпкă эпĕ. Эсĕ-çке çумра.
Тем кĕтсе малаллах шав тинкеретĕп.

Мĕн черечĕ тетĕп ман умра.
Турă суд тăвать. Тăнпа ăнланатăп.
Пăлхану шыратăп сăнунта. -
Эс хаваслă та, эп те лăпланатăп.

Мĕн черечĕ тетĕп ман умра.
Паллакан та пур. Кăсăклансах сăнатăп.
Тĕрĕслĕхпе çылăх тараси унта, -
Лăштăрах чунпа вăйран каятăп.

Эс килмерĕн...

Тăхăр кун та иртрĕ. Эс килмерĕн...
Тĕлĕкре те пулин курăнмарăн.
Тилмĕрсе чĕннине эс илтмерĕн,
Хытса ларнă чуна йăпатмарăн.

Вунă кун та, ак, çитрĕ. Эс килмерĕн...
Сана еплерех кĕтнине ăнланмарăн.
Тĕлĕкре те пулин тĕлленмерĕн.
«Ан йĕр, эп санпах», - темерĕн.

Тĕлĕкре те пулин килмерĕн...

Илсе кайрĕ

Юратăва илсе кайрĕ юратăвăм,
Çук, иртмест ниепле ыратăвăм.
Пирченсе-хытса ларчĕ ман чунăм,
Тĕксĕммĕн курăнать çутă кунăм.

Юратăва сутса ячĕ юратăвăм.
Мĕншĕн тек уçăлмасть кăмăлăм?
Пулас темерĕн, эппин, ылттăнăм?
Мĕнех, юлтăр чĕрере ыратăвăм.

Юратăва упрамарĕ юратăвăм,
Илсе каймарĕ пĕрле ыратăвăм.
Тарăн, тĕпсĕр пулчĕ суранăм,
Тек ырă кăтартайĕ-ши кунăм?

Юратăва пĕтерчĕ юратăвăм...

Юрату вилмест

Юратнӑ çынсем вилмеççĕ.
Вӑхӑтлӑх каяççĕ кӑна.
Каяççĕ те - таврӑнмаççĕ,
Кĕттерсе çунтараççĕ чуна.

Хушса юрламалли:
Юратнӑ çынсем вилмеççĕ.
Юратнӑ çынсем вилсен те пурнаççĕ.
Чунсен тĕнчинче çаврӑнаççĕ.
Юратнӑ çынсем пире курӑнмаççĕ.
Юратнӑ çынсем пире сыхлаççĕ.
Юратнӑ çынсем вилмеççĕ.

Юратнӑ çынсем вилмеççĕ.
Ан вӑрçӑн, ан пул кӑра.
Çӑлтӑрсем сӳнсен - савӑнмаççĕ,
Инкеке ку, ĕнен, сӑна...

Юратнӑ çынсем вилмеççĕ.
Шалти туйӑм хистет пурӑнма.
Каяççĕ те, мĕн-ма-ха килмеççĕ?
Мĕн-ма шикленеç курӑнма?

Юратнӑ çынсем вилмеççĕ...

Ӑнлан...

Пулнӑ пулсассӑн эсӗ çумра,
Тӗксе ярӑттӑм-и, тен, ӑнсӑртран.
Куç хупмасӑр кӗтсен те - çук çумра,
Тухаймасть ырату та чунран.

Хушса юрламалли:
Ан кӳрен, ан кӗвӗç, ӑнлан,
Чунӑма ирӗке эс ярсам.
Пӗлетӗп: тӳрленмӗ суран,
Пурпӗрех ӑнлан. Каçарсам!

Пулнӑ пулсассӑн эсӗ çумра,
Е тӗл пулнӑ пулсассӑн сана хушӑран,
Хӗвел çутине курма çут кунра
Ирӗк ыйтмӑттӑм эпӗ санран.

Çук та, ылттӑнӑм, эсӗ çумра,
Туятӑп хама çут тӗнче айӑпланӑн.
Чӗре уççийӗ хальччен те санра,
Ниепле ирӗке халь ямастӑн.

Юратусăр

Юратусăр та пулать пурăнма.
Ирĕккĕн те уççăн ахăлтатса кулма.
Чи телейлĕ çын пек курăнма,
Тус-тантăшшăн çăлăнăç пулма.

Юратусăр та пулать пурăнма.
Çын асап-нуши çине сурма.
Тус-тантăш çемйине аркатма,
Унăн куççульне кура кулма.

Юратусăр та пулать пурăнма.
Кӳршĕ-аршăна усал сунма.
Инкек-мĕн пулсассăн - сăнама,
Чĕрере шалта вĕчĕ тытма.

Юратусăр та пулать пурăнма.
Анчах канлĕх пулĕ-ши чунра?
Тытăнмĕ-ши халăх ылханма?
Çук, юрамастех тасалăха манма...

Кам эсĕ? Эпĕ кам?

Лĕпĕш-ши эсĕ? Сăпса-ши?
Эпĕ тата? Вĕлле хурчĕ, тен?
Сан чĕрӳне сăхма пултарайăп-ши?
Лĕпĕш пек вĕçсе, ак, çитĕп, тен?

Сăпса пек хытă çыртайăп-ши?
Ун пекех хытса выртăп, тен?
Пыл хурчĕ пек усă кӳрĕп-ши?
Лĕпĕш пулсан çăмăлрах килĕ, тен?

Лĕпĕш-ши эсĕ? Сăпса-ши?
Эпĕ тата? Вĕлле хурчĕ, тен?
Хăшĕ хăрушă? Пĕри ытлашши-и?
Нихăш те пулмалла та мар, тен?

Сентиере

Эс пĕчĕкчĕ ун чух...
Ик аллуна ман паталла тăсаттăн.
Эп çамрăкчĕ ун чух...
Пĕтĕм ачашлăха сана параттăм.

Ак утатăн, тăнкăлт! такăнатăн.
Тĕлĕнсе, тем кĕтсе, куçран тинкеретĕн:
«Ма ӳкеп эп? Ма тытмаççĕ мана урасем?
Кушакĕ пĕрре те ӳкмест...»

Ак çулталăк та иртрĕ...
Мĕнле маттуркка эс, пепкеçĕм!
Тетте арканать, турилкке çĕмĕрлет,
Пĕчĕкçеççĕ аллу урама сĕтĕрет.

Ак иккĕ тултартăн. Пиллĕк...
Çулсем малаллах шав чупаççĕ.
Эс ӳсетĕн, ирĕке туртăнатăн...
Аннӳн çулĕсем те иртеççĕ.

Эс пĕчĕкчĕ ун чух...
Шкул алăкне куллен уçаттăн.
Тантăшусем, юлташусем йĕри-тавра.
«Аннеçĕм, эп вĕсемпе каям-ха...»

Эс пĕчĕкчĕ ун чух...
Ик аллуна ман паталла тăсаттăн.
Эп çамрăкчĕ ун чух...
Пĕтĕм ачашлăха сана параттăм.

Ан калаç...

Ан калаç манпала, ан калаç,
Пурпĕрех хуравлаймăп.
Чĕрене ыраттартăн çав каç,
Пурпĕрех каçараймăп.

Хушса юрламалли:
Пулнă, иртнĕ,
Нумай шыв-шур юхнă.
Савăкки те пулнах, пулман мар.
Хавасланнă та пуль, çунатланнă та пуль,
Ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пуласса шаннă пуль.

Кирлĕ мар, ан калаç манпалан,
Чĕтренет ачаш сассăм.
Ан пăхсам тинкерсе куçăмран,
Ан сывла эсĕ ассăн.

Кай! Тархасшăн, çухал ман умран,
Сăмаху сан ултавлă.
Юхса анчĕ куççуль куçăмран,
Темшĕн вăл пит тăварлă.

Ан калаç. Иртнине тавăраймăн,
Касса татнă пулсан - сыпма çук.
Манăн йӳçĕ куççуль, ачаш чунăм,
Сан ултавлă чунна витес çук.

Эсĕ кай...

Эсĕ кайрăн... Илтĕнмест ура сасси те.
Мĕн тăвас? Тен, хыçăнтан чупас?
Çук, чĕремре сив кӳренӳ пулин те,
Куçăмри куççулĕме юхма памас.
Чун сан еннеллех туртать пулин те,
Ултавçă хыççăн нихăçан каймас.
Эсĕ кайрăн... Илтĕнмест ура сасси те.

Сивĕ... Сивĕ... Епле ăшăнас? Каласам!
Тулта - шартлама, чĕрере - çил-тăман,
Мĕншĕн ялан чĕрене çунтарас?
Мĕншĕн мана çирĕп кăмăл паман?
Мĕншĕн сана ачаша вĕрентмен?
Сивĕ... Сивĕ... Епле ăшăнас? Каласам!

Пурăнаççĕ çынсем, сивĕ чунлă пулин те.
Ыррисем çук тесе каламас.
Вĕсем хушшинче сан пекки те,
Мĕншĕн чуна ахалех çунтарас?
Сан пеккисемшĕн тасалăх çукки те
Пысăк çылăх вырăнне шутланмасть.
Пурăнаççĕ çынсем, чурăс чунлă пулин те.

Астăватăн-и, анне?

Ют хĕре киле ун чух илсе кĕтĕм.
Ыйтмарăм-тумарăм санран маларах.
Куçăнти ӳпкеве чăрсăррăн сиртĕм.
Шухăшларăм: хăть те мĕн калăрах...

Хушса юрламалли:
Астăватăн-и, анне?
Сисрĕм, - кӳрентĕн.
Кăлартăм анне куççульне.
Эсĕ те: «Ан авлан, ывлăм», - темерĕн.
Ăнлантăн арăм хаклăрах иккенне.

Санпа мар, ют хĕрпе туслă пултăм.
Хӳтĕлеттĕн манран ăна пурпĕрех.
Телей мар, шав инкек унпа куртăм.
Эс сивлемерĕн: «Ăнлану килетех...»

Каçар. Санран мар, хамран култăм.
Пĕрлешме кирлĕ мар пилсĕрех.
Çăмăллăнах арăма алă султăм.
Тĕв турăм юлма пĕччен, килсĕрех.

Пире эсĕ, анне, пĕр эсĕ ăнлантăн.
Мана мар, хӳтĕлерĕн киннех.
Çемье ăшшине те пĕр эсĕ упрарăн.
Тайма пуç ăс панишĕн. Тавах!

Шухăшăмсем – çунатăмсем

Тĕнчере ырри пурпĕрех ытларах! -
Кăшкăрассăм килет çулсем урлă.
Усалли те - пулин, пултăрах!
Эп вăйланăп кăна вĕсем урлă.

***

Пĕтĕм тĕнче илтмелле
Ахăлтатса кулса яр!
